Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 февралĕн 28 тунтикун
48 (4861)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

20-мĕш çул тухат ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67; Ред. заместителĕн 0—88; Редакци секретарĕн 4—40; Дежурнăйĕн 6—23

„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положени“ çинчен

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн Президиумĕ йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ çапла йышăнат:
„Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положени“ пройектне ырлас, ăна пăхса тухма Чăваш АССР Х-мĕш созывĕри Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн IX-мĕш Çессине тăратас.

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ **З. АНДРЕЙЕВА.**
Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕ **Т. ВАСИЛЙЕВ.**

Шупашкар хули.
1938 çулти февралĕн 25-мĕш.

ПРОЙЕКТ

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали ПОЛОЖЕНИ

I-мĕш сыпăк

Суйлав системи

1 статйа. Чăваш АССР Конституцийĕн 101 статйи тăрăх, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутатсене суйлавçăсем пурне те тивĕç, пĕртан тата тÿрех суйламала правапа вăрттăн сасăласа суйлаççĕ.

2 статйа. Чăваш АССР Конституцийĕн 102 статйи тăрăх, депутатсен суйлавĕ пурне те тивĕçлĕ: Чăваш АСС Республикĕн 18 çул тултарнă пур граждăнсен те, мĕнле расăпа нациоаљнăç пулнине, мĕнле тĕн тытнине, мĕн чухлĕ вĕреннине, пĕр вырăнта пурăннипе пурăнманнине, мĕнле социаллă сийрен тухнине, пурлăхĕ мĕнлине тата ĕлĕк мĕн ĕçпе пурăннине пăхмасăр,—ăсран тухнисемсĕр тата судпа айăпласа суйлав прависĕр хăварнă çынсемсĕр пуçне,—пурин те депутатсен суйлавне хутшăнма та Чăваш АССР Верховнăй Советне суйланма та права пур.

3 статйа. Чăваш АССР Конституцийĕн 103 статйи тăрăх, депутатсен суйлавĕ пĕртан: кашни граждăнинăн пĕр сасă пур; суйлавсенче пур граждăнсем те пĕртан тивĕçпе пулаççĕ.

4 статйа. Чăваш АССР Конституцийĕн 104 статйи тăрăх, хĕрарăмсем суйлас тата суйланас правапа арçынсемпе пĕртан усă кураççĕ.

5 статйа. Чăваш АССР Конституцийĕн 105 статйи тăрăх, Хĕрлĕ Çар ретĕнче тăракан граждăнсем суйлас тата суйланас правапа мĕн пур граждăнсемпе пĕртан усă кураççĕ.

6 статйа. Чăваш АССР Конституцийĕн 109 статйи тăрăх, суйлав чухне кандидатсене суйлав округĕсем тăрăх тăратаççĕ.

II-мĕш сыпăк

Суйлавçăсен спискисем

7 статйа. Суйлавçăсен спискине хуласенче ĕççынни депутачĕсен хула Совечĕсем, йалсенче—ĕççынни депутачĕсен йал Совечĕсем тăваççĕ.

8 статйа. Суйлавçăсен спискисене пур граждăнсене те,—суйлав прави пуррисене, спискăсене тунă вăхăта çав Совет территорийĕнче (йалан йе вăхăтлăха) пурăнакан сене, суйлав кунĕ тĕлне 18 çула çитнисене кĕртеççĕ.

9 статйа. Суйлавçăсен спискисене суд приговорĕсем тăрăх суйлав прависĕр хăварнă çынсене, суд приговорĕнче суйлав прависĕр хăварма кăтартнă пĕтĕм срук хушшинче, çавăн пекех тата саккун кăтартнă йĕрке тăрăх ăсран тухнă тесе шутланă çынсене кĕртмеççĕ.

10 статйа. Суйлавçăсен спискисене кашни суйлав участки тăрăх алфавит йĕркипе, суйлавçăн хушаматне, йатне, ашшĕ йатне, миçе çултине тата ăçта пурăннине кăтартса тăваççĕ те, ĕççынни депутачĕсен Совечĕн председателĕпе секретарĕ алă пусаççĕ.

11 статйа. Суйлавçăсене нихăшне те пĕр суйлав спискине кĕртниччен пуçне урăх спискăна кĕртме йурамаст.

12 статйа. Çар чаçĕсенче тата çар пĕрлешĕвĕсенче тăракан суйлавçăсен спискисене командовани тăват, вĕсене командирпа çар комиссарĕ алă пусаççĕ. Çарта ĕçлекен ытти мĕн пур çынсене суйлавçăсен спискисене вĕсем пурăнакан вырăнсенче ĕççынни депутачĕсен Совечĕсем кĕртеççĕ.

13 статйа. Бољницасемпе ача çуратмали çуртсем, санаторисем тата ытти сыватакан учрежденисем çумĕнче тăвакан суйлав участкисенчи суйлавçăсен спискине чирлĕ граждăнсене те тата суйлав кунĕнче дежурствăра пулакан медицинă персоналне те кĕртеççĕ.

Скарлатинă тата дифтери отделенисенче выртакан чирлĕ çынсем суйлава хутшăнма пултараймаççĕ.

14 статйа. Суйлав умĕн 30 кун маллтан ĕççынни депутачĕсен Совечĕ суйлавçăсен спискисене пурте пăхса тухма кăларса çакат йе çав спискăсемпе Совет çуртĕнче паллашма суйлавçăсене май туса парат.

15 статйа. Суйлавçăсен тĕп спискисем ĕççынни депутачĕсен тивĕçлĕ Советĕнче тата çар чаçĕсенче йе çар пĕрлешĕвĕсенче упранса тăраççĕ.

16 статйа. Суйлавçăсен спискине çырса пĕлтернĕ вăхăтпа суйлав кунĕ хушшинче суйлавçă урăх вырăна куçсан, кивĕ вырăнти ĕççынни депутачĕсен тивĕçлĕ Совечĕ ăна, Тĕп суйлав комиççийĕ йышăннă формăпа „сасăлама права паракан удостоверени“ парат те суйлавçăсен спискинче—„тухса кайнă“ тесе паллă тăват; йаланлăха йе вăхăтлăха пурăнма куçнă çĕнĕ вырăнта суйлавça, хăй камне пĕлтерекен удостоверени, çавăн пекех тата „сасăлама права паракан удостоверени“ кăтартсан, суйлавçăсен спискине кĕртеççĕ.

17 статйа. Суйлавçăсен спискинче тĕрĕсмарлăх пурри çинчен (спискăсене кĕртменни, спискăсенчен кăларни, хушамата, йата, ашшĕ йатне пăсса çырни, суйлав прависĕр хăварнă çынсене спискăна тĕрĕс мар кĕртни çинчен) зайавлени спискăсене çырса пĕлтернĕ ĕççынни депутачĕсен Советне п: мала.

18 статйа. Ĕççынни депутачĕсен Совечĕн ĕçтăвакан комитечĕ суйлавçăсен спискинчи тĕрĕсмарлăхсем çинчен панă кашни зайавленийе виçĕ кун хушшинче пăхса тухма тивĕç.

19 статйа. Суйлавçăсен спискинчи тĕрĕсмарлăхсем çинчен панă зайавленийе пăхса тухнă хыççăн, ĕççынни депутачĕсен Совечĕн ĕçтăвакан комитечĕ суйлавçăсен спискине йе кирлĕ тÿрлетÿсем кĕртме, йе зайавлени паракана унăн зайавленине мĕн сăлтавпа сирни çинчен çырнă справкă пама тивĕç; ĕççынни депутачĕсен Совечĕн решенийĕпе килĕшмесен, зайавлени паракан çын халăх судне жалăбă пама пултарат.

20 статйа. Халăх сучĕ виçĕ кун хушшинче, судăн уçă ларăвĕнче, зайавлени паракана тата Совет представителне чĕнсе, спискăри тĕрĕсмарлăх çинчен панă жалăбăна пăхса тухма тивĕç, хăйĕн решенине çийĕнчех зайавлени паракана та, çаплах тата Совета та пĕлтерме тивĕç. Халăх сучĕн решенийĕ татăклă.

III-мĕш сыпăк

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали суйлав округĕсем

21 статйа. Чăваш АССР Конституцийĕн 22 статйи тăрăх, Чăваш АССР Верховнăй Советне Чăваш АССР граждăнĕсем суйлав округĕсем тăрăх суйлаççĕ.

22 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали округ çак принциппа пулат: округ пуçне—12.000 çын. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали кашни суйлав округĕ пĕр депутат йарат.

23 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали суйлав округĕсене уйăрассине Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ тăват.

24 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали суйлав округĕсен спискине Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ суйлавсен кунне палăртса хунипе пĕр вăхăтра пичетлесе пĕлтерет.

IV-мĕш сыпăк

Суйлав участкисем

25 статйа. Суйлав бÿллетенĕсене илсе тăма тата сасăсене шутласа тухма Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали суйлав округĕсене кĕрекен хуласемпе районсен территорийĕ суйлав участкисене пайланат.

26 статйа. Суйлав участкисене хуласенче ĕççынни депутачĕсен хула Совечĕсем, йалти вырăнсенче — ĕççынни депутачĕсен район Совечĕсем тăваççĕ.

27 статйа. Суйлав участкисене уйăрассине суйлавччен 45 кунран кайа йулмасăр малтан тăваççĕ.

28 статйа. Йалсовет территорийĕ, унта пурнакансем икĕ пин çынран ытла мар пулсан, йалан пекех, пĕр суйлав участки пулса тăрат; кашни поçолкăра, салара, йалта, унта пурнакансем 500 çынран пуçласа 2000 çынран ытла мар пулсан—уйрăм суйлав участки организациleççĕ.

Халăх хисепĕ 500 çынран сахаллăрах, анчах 300 çынран сахал мар йалсенче йе йалсен ушкăнĕнче, çавăн пек йалсем суйлав участки центрĕнчен 10 километр ытла инçетре пулсан, уйрăм суйлав участкисем тума йурат.

29 статйа Уйрăм вырăнсенче, вак йалсем ытларах çĕрте, Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ йышăннипе суйлав участкисене халăх хисепĕ 100 çынран сахал мар пулсан организацилеме йурат.

30 статйа. Хуласем, рабочи поçолкисем çавăн пекех йалсем тата йалсовет территорийĕ, унта пурнакансем 2.000 ытла шутланаççĕ пулсан, суйлав участкисене пайланаççĕ, пĕр суйлав участкинче пурăнакансен хисепĕ 1.500—2.500 çын пулмала.

31 статйа. Çар чаçĕсем тата çар пĕрлешĕвĕсем, вĕсенче суйлавçăсем 50-ран сахал мар тата 1500 суйлавçăран ытла мар хисеппе уйрăм суйлав участкисем пулса тăраççĕ, вĕсем чаçсем йе çар пĕрлешĕвĕсем тăракан вырăнсенчи суйлав округне кĕреççĕ.

32 статйа. Бољницасенче, ача çуратмали çуртсенче, санаторисенче, инвалидсен çурчĕсенче суйлавçăсен хисепĕ 50-ран кайа мар пулсан, уйрăм суйлав участкисем тăваççĕ.

Темиçе корпуслă бољницасенчи уйрăм корпус çумĕнче, вĕсенче кашнинче 50 суйлавçăран сахал мар пулсан, суйлав участкисем тума йурат.

Уйрăм суйлав участкисем туман бољницасемпе сыватакан ытти учрежденисенче суйлав бÿллетенĕсене суйлав комиççисен уйăрнă членĕсем илме пултараççĕ. Ун пек чухне бољницасене уйрăм суйлав йешчĕкĕсем параççĕ.

V-мĕш сыпăк

Суйлав комиççийĕсем

33 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав комиççине обшчествăлă организацисен тата ĕççынни обшчествисен представителĕсенчен тăваççĕ, ăна Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ суйлавсен кунĕ çинчен пичетлесе пĕлтернипе пĕр вăхăтра çирĕплетет.

34 статйа. Тĕп суйлав комиççине çаксенчен тăваççĕ: председател, председателĕн заместителĕ, секретар тата 8 член.

35 статйа. Тĕп суйлав комиççийĕ:

а) Чăваш АССР пĕтĕм территорийĕнче суйлавсем пынă хушăра „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенийе“ çĕре тĕрĕс кĕртсе пынине сăнаса тăрат;

б) суйлав комиççийĕсем тĕрĕс мар тунисем çинчен панă жалăбăсене пăхса тухат тата жалăбăсем тăрăх татăклă решени йышăнат;

в) пичетсен, суйлав йешчĕкĕсен образецĕсене, „сасăлама права паракан удостоверенин“ формине, суйлав бÿллетенĕсен тата вĕсене валљи конвертсен формипе тĕсне, суйлавçăсен списки формине, сасăсене шутласа тухмали протоколăн формине, суйланни çинчен паракан удостоверени формине туса парат;

г) Чăваш АССР Верховнăй Советне суйланă депутатсене регистрацилет;

д) Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Мандат Комиççине суйлавсен делопроизводствине парат.

36 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали кашни суйлав округĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиççине тăваççĕ.

37 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округсенчи суйлав комиççийĕсене обшчествăлă организацисен тата ĕççынни обшчествисен представителĕсенчен тăваççĕ, вĕсене Чăваш АССР Верховнăй Совет президиумĕ суйлавччен 55 кунран кайа йулмасăр малтан çирĕплетет.

38 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Округри суйлав комиççине çаксенчен тăваççĕ: председател, председателĕн заместителĕ, секретар тата 6 член.

39 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Округри суйлав комиççийĕ:

а) ĕççынни депутачĕсен Совечĕсен ĕçтăвакан комитечĕсем суйлав участкисене вăхăтра организациленине сăнаса тăрат;

б) суйлав участкисен йĕрке номĕрĕсене кăтартса хурат;

в) суйлавçăсен спискисене вăхăтра тунине тата вĕсем çинчен пурне те пĕлтернине сăнаса тăрат;

г) Чăваш АССР Конституцийĕ тата „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положени“ хушнисене пăхăнса, Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлама тăратнă кандидатсене регистрацилет;

д) участкăри суйлав комиççийĕсене йышăннă формăлă суйлав бÿллетенĕсем тата конвертсем парса тăрат;

е) сасăсене шутласа тухат тата округ тăрăх суйлав резуљтачĕсене палăртса хурат;

ж) Тĕп суйлав комиççине суйлавсен делопроизводствине тăратат;

з) суйланнă депутата суйлани çинчен удостоверени парат.

40 статйа. Участкăри суйлав комиççине обшчествăлă организацисен тата ĕççынни обшчествисен представителĕсенчен тăваççĕ, вĕсене хуласенче ĕççынни депутачĕсен хула Совечĕсем, йалти вырăнсенче—ĕççынни депутачĕсен районри Совечĕсем суйлавччен малтан 40 кунран кайа йулмасăр çирĕплетеççĕ.

41 статйа. Участкăри суйлав комиççине çаксенчен тăваççĕ: председател, председател заместителĕ, секретар тата 2—6 член.

42 статйа. Участкăри суйлав комиççийĕ:

а) суйлав участки тăрăх суйлав бÿллетенĕсене илсе тăрат;

б) Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кашни кандидатшăн панă сасăсене шутласа тухат;

в) суйлавсен делопроизводствине Округри суйлав комиççине парат.

43 статйа. Тĕп суйлав комиççине округсенчи тата участкăсенчи суйлав комиççийĕсен ларăвĕсем, вĕсенче пĕтĕм комиççи составĕн çурри ытла пулсан, тĕрĕс шутланаççĕ.

44 статйа. Суйлав комиççийĕсенче пур ыйтусене те сасăсен ахаљ ытларахăшĕпе татса параççĕ; сасăсем пĕр тан пулсан, председател сасси ытларах тайăнат.

45 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас ĕçри расхутсем государствă шутĕнчен пулаççĕ.

46 статйа. Тĕп Суйлав Комиççийĕн Округсенчи тата участкăсенчи суйлав комиççийĕсен Тĕп суйлав комиççийĕ çирĕплетнĕ образецлă пичет пур.

VI-мĕш сыпăк

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутатне суйлама кандидатсем тăратас йĕрке

47 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне кандидатсем тăратас права—Чăваш АССР Конституцийĕн 109 статйи тăрăх—обшчествăлă организацисемпе ĕççынни обшчествисене: коммунисла партилĕ организацисене, профеççилĕ союзсене, кооперативсене, çамрăксен организацийĕсене, куљтурăлă обшчествăсене тата саккун йĕркипе регистрациленĕ ытти организацисене тивĕçлĕ.

48 статйа. Кандидатсем тăратас правана обшчествăлă организацисен тата ĕççынни обшчествисен республикăри органĕсем те, вĕсен районсенчи органĕсем те, çавăн пекех предприйатисенче—рабочисемпе служашчисен, çар чаçĕсенче—красноармейцăсен пĕрлехи пухувĕсем, çавăн пекех тата колхозсенче—хресченсен, совхозсенче—совхоз рабочийĕсемпе служашчисен пĕрлехи пухувĕсем пурнăçа кĕртеççĕ.

49 статйа. Депутата суйлама тăратнă кандидатсем Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Округри суйлав комиççисен, çавăн пекех тата вĕсене депутата суйлама кандидата тăратнă округри Участкă суйлав комиççисен членĕнче тăма пултараймаççĕ.

50 статйа. Суйлавчен 30 кун малтан, Чăваш АСС Республикĕн Верховнăй Советне депутатсем суйлама кандидатсем тăратакан пур обшчествăлă организацисем йе ĕççынни обшчествисем депутата суйлама тăратнă кандидатсене, Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен тивĕçлĕ Округри суйлав комиççийĕнче регистрацилемеле.

51 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Округри суйлав комиççийĕсем обшчествăлă организацисемпе ĕççынни обшчествисем Чăваш АССР Конституцийĕ тата „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положени“ хушнисене пăхăнса тăратнă кандидатсене пурне те регистрацилеме тивĕç.

52 статйа Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидатсем тăратакан обшчествăлă организаци йе ĕççынни обшчестви Округри суйлав комиççине çак докумен сене тăратма тивĕç:

а) депутата суйлама кандидат тăратнă пуху йе лару президиум членĕсем алă пуснă, вĕсем миçе çултине, ăçта пурăннине, кандидат тăратнă организацин йатне, депутата суйлама кандидат тăратнă пуху йе лару ăçта, хăш вăхăтра, унта миçе çын пулнине кăтартса çырнă протокола, çавăнпа пĕрлех протоколра депутата суйлама тăратнă кандидатăн хушаматне, йатне, ашшĕ йатне, вăл миçе çултине, ăçта пурăннине, партире тăнипе тăманнине, мĕн ĕçпе пурăннине кăтартса çырмала;

б) депутата суйлама тăратнă кандидат вăл çав суйлав округĕнче хăйне тăратнă организацирен баллотировкăна тăма килĕшни çинчен зайавлени.

(Йулашки 2-мĕш страницăра).

ПРОЙЕКТ

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали ПОЛОЖЕНИ

(Йулашки)

53 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат пĕр округра кăна сасăланма пултарать.

54 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕҫлекен Округри суйлав комиссийĕ депутата суйлама тăратнă кандидата регистрацилеме йышăнманни ҫинчен икĕ кунлă срукра Тĕп суйлав комиссине жалăба пама пулать, Тĕп Суйлав Комиссийĕн решенийĕ татăклă пулса тăрать.

55 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама регистрациленĕ кашни кандидатăн хушаматне, йатне, ашшĕ йатне, миҫе ҫултине, мĕнле ĕҫпе пурăннине, партире тăнине тăманнине тата кандидат тăратнă организаци йатне Округри суйлав комиссийĕ суйлавччен 25 кун малтан пичетлесе пĕлтерет.

56 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама регистрациленĕ пур кандидатсене те суйлав бӳллетенне обйазательнă кĕртмеле.

57 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕҫлекен Округри суйлав комиссисен Чăваш АССР Верховнăй Советне суйличчен 15 кун малтан суйлав бӳллетенĕсене пичетлемеле те пур участкăри суйлав комиссисене салатса памала.

58 статйа. Суйлав бӳллетенĕсене суйлав округĕнче пурнакан халăх чĕлхипе пичетлеҫҫĕ.

59 статйа. Суйлав бӳллетенĕсене Тĕп суйлав комиссийĕ йышăннă формăпа тата пур суйлавҫăсене те суйлав бӳллетенĕсем пама ҫителĕклĕ шутпа пичетлеҫҫĕ.

60 статйа. Округри суйлав комиссийĕнче регистрациленĕ кандидата тăратнă кашни организацин, ҫавăн пекех тата Чăваш АССР кашни гражданинĕн, Чăваш АССР Конституцийĕн 92 статйи тăрăх, ҫав кандидатшăн пухусенче, пичетре тата урăх майсемпе те ним чăрмавсăр агитацилеме права пур.

VII сыпăк

Сасăлас йĕрке

61 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйласси пĕтĕм Чăваш АСС Республикипех пĕр кун хушшинче пулса иртет.

62 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас куна Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ суйлав срукĕччен 2 уйăх малтан палăртса хурать. Суйлав ĕҫлемен кунра пулса иртет.

63 статйа. Суйлав умĕнхи йулашки 20 кун хушшинче участкăри суйлав комиссийĕ кулленех суйлав кунепе суйлав ăҫта пуласси ҫинчен пичетлесе йе мĕнле те пулин урăх майпа суйлавҫăсене анлăн пĕлтерсе тăрать.

64 статйа. Суйлавҫăсем сасă парасси суйлав кунĕнче вырăнти вăхăтпа ирхине 6 сехетрен пуҫланса ҫĕрле 12 сехетчен пулса иртет.

65 статйа. Суйлав кунĕнче ирхине 6 сехетре Участкăри суйлав комиссийĕ председателĕ, унăн членĕсем умĕнче, суйлав йешчĕкĕсене тата йышăннă формăпа тунă суйлавҫăсен списки пуррине тĕрĕслет, кун хыҫҫăн йешчĕксене хупать те комисси пичечĕпе пичетлесе хурать, вара суйлавҫăсене сасă пама тытăнма чĕнет.

66 статйа. Кашни суйлавҫă хăй сасăлать, ҫавна тума сасăламали ҫурта пырать, суйлавҫăсем сасă парасси вара суйлав бӳллетенне конверт ăшне хурса пичетлесе суйлав йешчĕкне йанипе пулса иртет.

67 статйа. Суйлав ҫуртĕнче бӳллетенсене тултарма, уйрăм пӳлĕм уйăраҫҫĕ, унта сасăланă вăхăтра, сасăлакансемсĕр пуҫне урăх никамăн та, ҫав шутрах участкăри суйлав комиссин членĕсен те, пулма йурамасть; бӳллетене ҫырса тултармалли пӳлĕме пĕр вăхăтрах темиҫе суйлавҫă кĕртес пулсан, пӳлĕме хăмасемпе йе ширмăсемпе пĕр вăхăтра миҫе суйлавҫă кĕртнĕ хисеп тăрăх пӳлсе уйăрмала.

68 статйа. Суйлав ҫуртне пынă суйлавҫă участкăри суйлав комиссин секретарне йе паспорт, йе колхоз кĕнеки, йе профсойуз билечĕ, йе вăл камне пĕлтерекен урăх удостоверени кăтартать, вара суйлавҫăсен списки тăрăх тĕрĕсленĕ тата суйлавҫăсен спискинче паллă тунă хыҫҫăн, йышăннă образецлă суйлав бӳллетенĕ тата конверт илет.

69 статйа. Ҫак „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 16-мĕш статйи тăрăх, Суйлав ҫуртне „сасăлама права паракан удостоверенипе" пынă ҫынсене Участкăри суйлав комиссийĕ уйрăм спискăна ҫырса пырать, ăна суйлавҫăсен списки ҫумне хурать.

70 статйа. Суйлавҫă, суйлав бӳллетенĕсене тултарма уйăрнă пӳлĕмре, суйлав бӳллетенĕнче хăй камшăн сасăлать, ҫав кандидатăн хушаматне хăварать, ыттисене хуратса хурать, бӳллетене конверт ăшне хурса, конвертне ҫыпăҫтарса, суйлавҫă Участкăри суйлав комиссийĕ вырнаҫнă пӳлĕме пырать те, суйлав бӳллетенĕ хунă конверта суйлав йешчĕкне йарать.

71 статйа. Хутла пĕлмен пирки йе пӳ-ҫири мĕнле те пулин ҫитменлĕх пирки хăйсем тĕллĕн суйлав бӳллетенне тултарма пултарайман суйлавҫăсем, суйлав бӳллетенне тултармалли пӳлĕме кирек хăш урăх суйлавҫа та суйлав бӳллетенне тултарма чĕнсе кĕртме пултараҫҫĕ.

72 статйа. Суйлав ҫуртĕнче сасăсем панă вăхăтра суйлав агитацине тума йурамасть.

73 статйа. Суйлав ҫуртĕнчи йĕркелĕхшĕн комисси председателĕ ответлă пулса тăрать, унăн распорйаженийĕсем унта пынă ҫынсемшĕн пуриншĕн те обйазательнă.

74 статйа. Суйлав кунĕнче ҫĕрле 12 сехетре Участкăри суйлав комиссин председателĕ сасăсем парасси пĕтнĕ тесе пĕлтерет, вара комисси суйлав йешчĕкĕсене уҫма тытăнать.

VIII сыпăк

Суйлав резуљтачĕсене палăртасси

75 статйа. Участкăри суйлав комиссийĕ сасăсене шутлакан ҫуртра, сасăсене шутланă чухне, общественнă организацисен тата ĕҫ ҫынни общественнисен йатарласа полномочи панă представителĕсен, ҫавăн пекех тата пичет представителĕсен пулма права пур.

76 статйа. Участкăри суйлав комиссийĕ, йешчĕксене уҫса панă конвертсен хисепне сасăлама хутшăннă ҫынсен хисепĕпе тĕрĕслесе тухать те, тĕрĕсленин резуљтачĕсене протокола ҫырса хурать.

77 статйа. Участкăри суйлав комиссин председателĕ конвертсене уҫать те, Участкăри суйлав комиссин мĕн пур членĕсем умĕнче кашни бӳллетен тăрăх сасăланин резуљтачĕсене каласа парать.

78 статйа. Депутата суйлама тăратнă кашни кандидат пуҫне комисси секретарĕ тата Участкăри суйлав комиссин ҫав ĕҫе тума полномочи панă членĕсем 2 екземпљар шутлав листи ҫырса пыраҫҫĕ.

79 статйа. Бӳллетенсене чăн мар тесе шутлаҫҫĕ:

а) йышăнман образецлисене тата йышăнман тĕслисене;

б) конвертсăр йе йышăнман образецлă конвертпа панисене;

в) депутата суйламалли хисепрен ытларах кандидатсем панисене.

80 статйа. Суйлав бӳллетенĕ тĕрĕсси пирки иккĕленӳ тухсан, ыйтăва участкăри суйлав комисси сасăласа татса парать, ун ҫинчен протоколра паллă тăвать.

81 статйа. Участкăри суйлав комиссийĕ сасăланин протоколне йышăннă формă тăрăх икĕ екземпљар ҫырать, вĕсем ҫине участкăри суйлав комисси членĕсем пурте, ҫав шутра председателĕпе секретарĕ обйазатељнă алă пусаҫҫĕ.

82 статйа. Сасăлани ҫинчен ҫырнă протоколра участкăри суйлав комиссин ҫаксене кăтартмала:

а) сасă пама пуҫланă тата парса пĕтернĕ вăхăта;

б) суйлавҫăсен списки тăрăх сасă панă суйлавҫăсен хисепне;

в) „сасăлама права паракан удостоверени" тăрăх сасă панă суйлавҫăсен хисепне;

г) панă конвертсен хисепне;

д) участкăри суйлав комиссине панă зайавленисемпе жалăбăсенче мĕн ҫинчен каланисене кĕскен ҫырнине тата участкăри суйлав комисси йышăннă решенисене;

е) кашни кандидатшăн панă сасăсене шутланин резуљтачĕсене.

83 статйа. Сасăсене шутласа пĕтернĕ тата протокол ҫырнă хыҫҫăн, комисси председателĕ комиссин мĕн пур членĕсем умĕнче сасăланин резуљтачĕсене каласа парать.

84 статйа. Сасăлани ҫинчен участкăри суйлав комиссийĕ ҫырнă протоколăн пĕр екземпљарне, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсен шутлав листисен икĕ екземпљарĕпе пĕрле, нарочнăйпа 24 сехет хушшинче Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕҫлекен Округри суйлав комиссине йараҫҫĕ.

85 статйа. Участкăри суйлав комисси председателĕн суйлав бӳллетенĕсене пурне те (чăннисене уйрăмăн, тата чăн мар тесе йышăннисене уйрăмăн) участкăри суйлав комиссин пичечĕпе пичетлесе хумала та, сасăлани ҫинчен ҫырнă протоколăн иккĕмĕш екземпљарĕпе тата пичетне те сыхласа усрама хуласенче—ĕҫҫынни депутачĕсен хула Советне; йалти вырăнсенче—ĕҫҫынни депутачĕсен районри Совечĕсене памала.

86 статйа. Ĕҫҫынни депутачĕсен Совечĕсем суйлав бӳллетенĕсене ҫав округ депутачĕсен мандачĕсене Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ ҫирĕплетиччен сыхласа усрама тивĕҫ.

87 статйа. Округри суйлав комиссийĕ сасăсене шутлакан ҫуртра сасăсене шутланă чухне, общественнă организацисемпе ĕҫ ҫынни общественнисен йатарласа полномочи панă представителĕсем, ҫавăн пекех тата пичет представителĕсем пулма права пур.

88 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕҫлекен Округри суйлав комиссийĕ сасăсене Участкăри суйлав комиссийĕсем тăратнă протоколсем тăрăх шутласа тухать.

89 статйа. Кашни кандидат пуҫне Округри суйлав комиссийĕ икĕ екземпљар шутлав листи ҫырса пырать, унта депутата суйлама тăратнă кашни кандидат илнĕ сасăсен хисепне паллă тăвать.

90 статйа. Округри суйлав комиссийĕ сасăлани ҫинчен икĕ екземпљар протокол ҫырать, вĕсене Округри суйлав комисси членĕсем пурте, ҫав шутра председателĕпе секретарĕ обйазатељнă, алă пусаҫҫĕ.

91 статйа. Округри суйлав комиссин протоколĕнче ҫаксене кăтартмала:

а) Округри суйлавҫăсен пĕтĕм хисепне;

б) сасăлама хутшăннă суйлавҫăсен пĕтĕм хисепне;

в) депутата суйламалли кашни кандидатшăн панă сасăсен хисепне;

г) Округри суйлав комиссине панă зайавленисемпе жалăбăсенче мĕн ҫинчен каланисене кĕскен ҫырнине тата Округри суйлав комиссийĕ йышăннă решенисене.

92 статйа. Сасăсене шутласа тухнă хыҫҫăн 24 сехетрен кайа хăвармасăр Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламалли Округри суйлав комисси председателĕ, протоколăн пĕрремĕш екземпљарне шутлав листисемпе пĕрле, пичетлесе, нарочнăй урлă Тĕп суйлав комиссине йама тивĕҫ.

93 статйа. Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутатне суйламалли кандидат абсољутлă ытларах сасă илни, урăхла каласан, округра панă, чăн тесе йышăннă мĕн пур сасăсен ҫурринчен ытларах илни, суйланнă шутланать.

94 статйа. Протокола алă пуснă хыҫҫăн, Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламалли Округри суйлав комиссин председателĕ суйлавсен резуљтачĕсене каласа парать те, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланнă кандидата суйлани ҫинчен удостоверени парать.

95 статйа. Кандидатсенчен пĕри те абсољутлă ытларах сасă илмен пулсан, тивĕҫлĕ Округри суйлав комиссийĕ ҫавăн ҫинчен протоколра уйрăм паллă тăвать те; Тĕп суйлав комиссине пĕлтерет тата куппа пĕр вăхăтрах, чи нумайрах сасă илнĕ икĕ кандидата тепĕр хут баллотировка тăвасси ҫинчен пĕлтерет, ҫавăн пекех тата ҫĕнĕрен баллотировкă тумалли куна, суйлавсен пĕрремĕш турĕ иртнĕ хыҫҫăн, икĕ ернерен кайа хăвармасăр, палăртса хурать.

96 статйа. Округра панă сасăсен хисепĕ ҫав округри сасăлама права пур суйлавҫăсен ҫурринчен сахалтарах пулсан, Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламалли Округри суйлав комиссийĕ ҫавăн ҫинчен протоколра уйрăмăн паллă тăвать те, ҫийĕнчех Тĕп Суйлав Комиссине пĕлтерет, кун пек чухне вара Тĕп Суйлав Комиссийĕ пĕрремĕш суйлавсем хыҫҫăн икĕ ернерен кайа хăвармасăр ҫĕнĕрен суйлав ирттермеле тăвать.

97 статйа. Депутата суйламалли кандидатсен тепĕр хут баллотировкине, ҫавăн пекех тата чăн мар тесе йышăннисен вырăнне ҫĕнĕ суйлавсене пĕрремĕш суйлавсем валљи тунă суйлавҫăсен списки тăрăх, тата пĕтĕмĕшпех ҫак „Чăваш АССР Верховнăй Советне суйламалли Положени" тăрăх туса ирттереҫҫĕ.

98 статйа. Депутат Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн составĕнчен тухса ӳксен, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ 2 ернелĕ срукра, анчах депутат Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн составĕнчен тухнă хыҫҫăн 2 уйăхран кайа мар, тивĕҫлĕ суйлав округĕнче ҫĕнĕ депутат суйлавне ирттермелли срука палăртать.

99 статйа. Кирек кама та, вăл пусмăрласа, улталаса, йунаса йе подкуп туса Чăваш АССР гражданинне унăн Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тата суйланас правине пурнăҫа кĕртме чарса тăрать пулсан, 2 ҫул таран сруклăха хупса лартма пултараҫҫĕ.

100 статйа. Советăн ĕҫлĕ ҫыннине йе суйлав комиссин членне, суйлавра суйа документсем тунăшăн йе сасăсене йурийех тĕрĕс мар шутланăшăн—3 ҫул таран сруклăха хупса лартма пултараҫҫĕ.

Сљот делегачĕ Семенов

МĂН-СЕНТЕР (телефон тăрăх). Кашмашри „Свобода" колхозри Антон Семенов 1934 ҫултанпа таварлă сысна фермипе ĕҫлет. Тӳрĕ тата тăрăшса ĕҫленĕшĕн ăна колхоз правленийĕ кашни ҫулах премипе панă.

Антон Семенович 1932 ҫулта колхоза кĕнĕ, пĕтĕм вăйĕпе, пултарулăхĕпе колхоз ĕҫне парăннă. Колхозра мĕнле пурăнмалине, мĕнле ĕҫлемелине часах ăнланса илнĕ. Хăйне фермăра ĕҫлеме суйласанах кашни амаран ҫулталăкра 31 ҫурă ҫитĕнтерес задачă лартнă. Премипе шучĕпе илнĕ сысна аминчен те 31 ҫурă ҫитĕнтерме пулнă вăл.

Семеныч хăй тунă ӳсĕмĕсемпе лăпланса лармасть, малалахи ӳсĕмсемшĕн кĕрешет. 1934 ҫулта хăй пăхакан 5 амаран 141 ҫурă, 1937 ҫулта 4 амаран 126 ҫурă пăхса ҫитĕнтернĕ. Ҫапла ĕҫлесе пыппе кура 1938 ҫулхи йанварĕн 1-мĕшне фермăри сыснасен шучĕ 244 пуҫа ҫитнĕ.

Колхозниксем Семенов йулташа йалхуҫалăхĕнче малта пыракансен республикăри сљотне кайма суйларĕҫ.

Горланов.

Коммуниссем—кĕрешӳ пуҫĕнче

Пољанкăри С. М. Киров йачĕпе тăракан колхоз—Йетĕрне районĕнчи чи пысăк колхозсенчен пĕри. Пољанкă колхозникĕсем вăйлă тырпулшăн, тупăшсене ӳстерсе, пурнăҫа пуйанлатса, кулљтурлатса пырассишĕн хĕрӳллĕ кĕрешеҫҫĕ. Колхозниксемпе колхозницăсене ҫав кĕрешӳре колхозри коммуниссем йертсе пыраҫҫĕ.

Колхоз ҫумĕнчи парти кандидачĕсен группи авторитечĕ пысăк. Коммуниссем ĕҫре ҫирĕпленсе, вĕренсе, ӳссе пыраҫҫĕ. Ленин—Сталин партин ĕҫĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăнине ĕҫре кăтартнă Горбунов йулташ парти кандидатĕнчен члена куҫнă (документсем ҫеҫ илеймен-ха). Вăл колхоз председателĕ пулса ĕҫлет. Таварлă сĕт-ҫу фермин пуҫлăхĕнче ĕҫлекен М. Чистаков йулташ та кандидатран члена куҫма рекомендацисем тупса хатĕрлет. Ҫĕнĕрен парти ретне кĕнисем ҫинчен уйрăмăнах асăнмала. Акă; Иван Николайевич Йухтанов йулташ. Вăл нумай пулмасть парти кандидатне кĕнĕ. Унччен сочувствуйушчи пулнă. ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленнĕ вăхăтра Конституципе тата суйлав Положенине вĕренекен кружока йертсе пынă. Кандидатсен группи И. Н. Йухтанов йулташа ĕҫе хутшăнтарса, вĕрентсе, пулăшса пырса парти ретĕнче тăма тивĕҫлĕ ҫын тунă. Хаљхи вăхăтра комсомол комитечĕн секретарĕ пулса ĕҫлекен Кукушкин йулташ та парти кандидатне кĕме рекомендацисем хатĕрлет.

Ҫапла ӳссе, малала кайса пыраҫҫĕ Пољанкă колхозĕнчи коммуниссем. Партире тăман активиссемпе комсомолецсем хушшинче партине кĕрес туртăм вăйлăнсах пырать. Ҫамрăксем комсомола кĕме туртăнни те калама ҫук вăйлă. Колхоз ҫумĕнчи комсомол организацинче хаљхи вăхăтра 35 ҫын тăраҫҫĕ, вĕсенчен кăҫал комсомола кĕнисем 22 ҫын, пуҫламĕш организаци комсомола илнисем (райком ҫирĕплетме ĕлкĕреймен-ха) 12 ҫын тата 3 ҫын зайавлени панă. Комсомол организаци сойуз кунĕсене йĕркелĕ ирттерсе пырать, комсомолецсене пурне те политикăна вĕрентес ĕҫе йавăҫтарнă. Нумай комсомолецсем кулленхи агитаци ĕҫĕнче коммуниссене хастарлă пулăшса пыраҫҫĕ Нумай пулмасть кунти комсомол комитечĕн секретарĕ пулнă Чистаков йулташ хаљ Йетĕрне райкомолĕн секретарĕ. Ҫаксем ĕнтĕ парти кандидачĕсен группин тата комсомол организацин кулленхи ĕҫĕсен резуљтачĕсем пулса тăраҫҫĕ.

Пољанкă колхозĕнче кашни коммунис кулленех агитаци ĕҫне туса пырать. Сăмахран, М. Чистаков йулташ—фермă пуҫлăхĕ. Фермăра пурĕ 30 ҫын ĕҫлеҫҫĕ. Фермăра ĕҫлекенсене вăл кулленех хаҫатсем вуласа парать, хаҫатсенчен вуласа пĕлнине каласа кăтартать. И. Н. Йухтанов йулташ (вăл нумай пулмасть парти кандидатне кĕнĕ, терĕмĕр) хăйĕн ĕҫĕ ҫинчен ҫапла калать:

— Парти Тĕп Комитечĕн йанварти Пленумĕ йышăннă постановленийе епĕр районри коммуниссен пухăвĕнче сӳтсе-йаврăмăр. Унтан хамăрăн парти кандидачĕсен группинче те сӳтсе-йаврăмăр. Кун хыҫҫăн мана парторг колхоз бригадин пухăвĕнче доклад тума хушрĕ. Пухура Тĕп Комитет Пленумĕн постановленине вуласа патăм тата районри пухура илтнĕ примерсене илсе ăнлантарса патăм.

Епĕр каласса ларнă хушăра та И. Н. Йухтанов йулташ аллинче хаҫат. Вăл Сталин йулташ Иванов комсомолец патне йанă ҫырува вуласа тухнă.

— Пайан-ыранах Сталин йулташ ҫырупе бригадăри колхозниксемпе колхозницăсене вуласа, ăнлантарса паратăп, тет вăл.

Епĕр Пољанкăна ҫитнĕ кунччен Сталин йулташ ҫырупе парти вĕренӳвĕн кружокĕнче сӳтсе йавма ĕлкĕреймен-ччĕ. Анчах коммуниссем, кружок пухăнасса кĕтмесĕр, кашнийех ăна вуласа тухнă та хăйсем ку ҫырува лайăх ăнланни ҫинчен каласа параҫҫĕ.

Колхозри коммуниссем вăйлă тырпулшăн кĕрешӳве пуҫарса пыни ҫинчен колхоз председателĕ Горбунов йулташ пит тĕл каларĕ:

— Мухтанас йăла пирĕн ҫук, килĕшӳсĕр йăла вăл... Анчах мĕн пуррине калас пулать. Пирĕн колхоз ҫуракине тухма пур йенчен те хатĕр. Парти организаци вăйлă тырпулшăн кĕрешме колхозниксен хăватне ҫĕклерĕ!

Кусем—калама ҫук тĕрĕс сăмахсем. Колхозниксен кĕрешӳ хăвачĕ вăйлипе ĕнтĕ колхозăн вăрлăхĕсем, ҫĕре ҫемҫетмелисем, ĕҫхатĕрĕсем—пурте хатĕр. Ҫуртыррисем акмалли пĕтĕм лаптăка кĕрсухи туса хăварнă. Кăҫалхи йалхуҫалăх ĕҫĕсене тунă чухне ăмăртса ĕҫлеме Тури Ачакри тата Иваљкăвăри колхозсемпе ăмăрту договорĕсем тунă...

Епĕр колхозри коммуниссемпе тата комсомолецсемпе каласса ларнă хушăра чылай ҫула ҫитнĕ колхозник пырса кĕчĕ. Ака-суха ĕҫĕсем ҫинчен сăмах пынине илтсен, вăл та каласăва хутшăнчĕ.

— Калăр-ха йулташсем, — терĕ вăл,—ҫитес кĕркунне те каллех ыраш акмала пулĕ-ши вара?

Епĕр, колхоза пынисем, ку сăмахсене калакан ҫине тĕлĕнерех пăхрăмăр. Мĕнле, ыраш акмасан?..

Горбунов йулташ епĕр тĕлĕннине туйрĕ.

— Ĕҫ ҫапла пулчĕ,—терĕ вăл.—1935 ҫулччен пирĕн ҫĕр ҫинче нихҫан та никам та тулă акса пăхман. 1935 ҫулта 5 гектар, 1936 ҫулта—26 гектар, 1937 ҫулта—112 гектар кĕрхи тулă акрăмăр. Виҫĕ ҫул хушшинче те тулă лайăх пулчĕ. Хаљ тул кулачи ҫийетпĕр. Йалхуҫалăх ĕҫĕсен планне сӳтсе-йавнă чухне пур бригадăсенче те колхозниксем:—Ҫитес кĕркунне пĕтĕм лаптăк ҫине (пурĕ 212,7 гектар) кĕрхи тулă акас, тесе йышăнчĕҫ. Вăрлăхĕ пирĕн хамăрăн, тĕрĕсленнĕскер. Ҫĕрне лайăх ĕҫлесе ҫемĕҫтеретпĕр. Вăйлă тухăҫлă тулă туса илетпĕрех. Анчах... райĕҫтăвком президиумĕнче плана ҫирĕплетнĕ чухне пире кĕрхи тулă 108 гектар ҫеҫ, ыттине ыраш акма каларĕҫ. Ҫавăн ҫинчен сăмах пырать...

Чăн та, сăмах пымалах ҫав. Пољанкă колхозникĕсем хаљ вунпĕр кружокра агротехникăна вĕренеҫҫĕ. Вĕсем ҫĕр ĕҫне тĕплĕн, хастарлăн тăваҫҫĕ. Ҫакăн хыҫҫăн вĕсем вăйлă тулă туса илессе шанмала мар-и вара? Шанмалах!

Ф. Александров.

Пољанкă, Йетĕрне районĕ.

ССРС Прокуратуринче

Пайан, февралĕн 28-мĕшĕнче, ирпе, Мускавран ТАСС пĕлтернĕ тăрăх, ССРС Шалти Ĕҫсен Халăх Комиссариачĕн оргăнĕсем „Сылтăм-троцкисла блок" текен заговорла ушкăн ĕҫĕ пирки следстви туса пĕтернĕ.

Брестра мирлĕ килĕшӳ тунă тапхăрта Бухаринпа Троцкий ушкăнĕсем ес-ерсемпе пĕрле Ленина хирĕҫ заговор организациленĕ, Ленина, Сталина, Свердлова арĕслесе вĕлерес, бухаринцăсенчен, троцкиссенчен, „сулахай" ес-ерсенчен правителствă тăвас тĕллев тытнă.

Ҫак ĕҫпе айăпланакансем С. М. Кирова, В. В. Куйбышева, В. Р. Менжинскине, А. М. Горькине тискеррĕн вĕлерес ĕҫе организациленĕ.

Ҫак ĕҫ тăрăх айăпланаҫҫĕ: Бухарин, Рыков, Йагода, Крестинский, Раковский, Розенгољц, Иванов, Чернов, Гринько, Зеленский, Бессонов, Икрамов, Ходжайев Файзулла, Шарангович, Зубарев, Буланов, Левин, Плетнев, Казаков, Максимов, Крючков.

ССРС Прокурорĕ ĕҫе ССРС Верховнăй Суд Ҫар Коллегине судăн уҫă ларувĕнче пăхса тухма панă.

Суд мартăн 2-мĕшĕнче пуҫланать.

Колхоза кĕреҫҫĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Ҫураки ҫывхарнă май колхоза кĕрекенсен йышĕ ӳсех пырать. Ҫак кунсенче Шĕмешри „Мотор" колхоза ҫĕнĕрен 8 хуҫалăх кĕчĕҫ. Колхоза кĕрсен вĕсен ҫуракине хатĕрленес ĕҫре хĕрӳллĕн хутшăнса ĕҫлеме пуҫларĕҫ.

Йак. Ҫигай.

„Турăсăр" колхоз васкамасть

ЕЛĔК. Йефремкасси йалсоветне кĕрекен „Турăсăр" колхозăн кăҫалхи ҫуракинче пĕтĕмпе 192,55 гектар акса хăвармала. Ҫав ҫĕр ҫине акса хăварма сĕлĕ, тулă, пăрҫа, кантăр вăрри, клевер вăрри кирлĕ таран хатĕрлесе хунă. Анчах та викă вăрлăхĕ ҫителĕклĕ мар. План тăрăх викă вăрлăхĕ 39,60 центнер кирлĕ халĕ, 24 центнер ҫеҫ пур-ха. Йасмăк тата викă вăрлăхĕсене пачах та суртламан. Колхоз председателĕ Воробйов йулташ: „Вĕсене тасатсан хума вырăн ҫук, ҫавăнпа тасатаймарăмăр",—тет.

Йалхуҫалăх машинисене, ҫуракинче кирлĕ ытти ĕҫхатĕрĕсене йусаси татах та начар пырать. 3-мĕш бригадăра (бригадирĕ А. Плотников) плугсене пачах та йусама тытăнман. Сӳресем чылайăшĕ ҫĕмĕрлсе пĕтнĕ, вĕсемпе ҫуракинче ĕҫлеме май ҫук. Турасем пĕтĕмпе 9 штук ҫитмеҫҫĕ.

Ҫĕре ҫемҫетмелисем хатĕрлессишĕн, уйа тислĕк, йушкăн тăкассишĕн ҫителĕклĕ кĕрешмеҫҫĕ. Кӳрсе килнĕ силвинт йур айне пулнă.

„Турăсăр" колхоз иртнĕ ҫулта Йефремкассинчи „Майăн 1 мĕш" колхозпа ăмăртса ĕҫленĕ. Кăҫал нихăш колхозпа та ăмăртува тухман.

Ф. Филиппов.

Йĕпреҫпе Канаш районĕсене бољшевикла ĕҫлеме ыйтатпăр

Епĕр Чернореченскри авто-трактор ҫулĕ ҫинчи шоферсем, трактористсем тата инженерла-техникăла работниксем вăрман хатĕрлевĕнчи стахановла уйăхлăха хутшăнса хамăр ума стахановла ĕҫлеме задачă лартрăмăр. Пирĕн тракторсемпе автомашинăсем йусавлă. Вĕсемпе кашни талăкра 400 кубла метр йе ытларах йăвăҫ турттарса кăларма, 250 кубла метр йăвăҫа ҫулсем ҫывăхне турттарса пыма пултаратпăр.

Анчах хаљхи вăхăтра 150—200 кубла метр ҫеҫ турттарса кăларатпăр. Стахановла уйăхлăхăн пирвайхи вунăкунлăхĕнче механизмсемпе 4000 кубла метр туттарас вырăнне, 1400 кубла метр ҫеҫ турттарса кăларнă. Тракторсем ахаљ тăраҫҫĕ. Мĕншĕн тесен, хатĕрленĕ тата механизациленĕ ҫулсем патне йăвăҫсем ҫителĕксĕр турттарнă. Кунашкал пулни Йĕпреҫпе Канаш районĕсенчи колхозсем тата йединоличниксем вăрман хатĕрлев ĕҫне хакламаннинчен килет.

Хатĕрленĕ йăвăҫ пулман пирки авто-трактор паркĕ ĕҫлеме чарăнса ларас хăрушлăх умĕнче тăрать. Ҫулсем патĕнчи хатĕрленĕ йăвăҫсем стахановла уйăхлăхăн талăкри планне тултарма та ҫитмеҫҫĕ.

Епĕр Йĕпреҫпе Канаш районĕсенчи совет тата парти организацисене тата колхозниксемпе йединоличниксене стахановла уйăхлăхра вăрман хатĕрлев планне тултарассишĕн бољшевикла ĕҫлеме тытăнма ыйтатпăр.

Шоферсемпе трактористсем сакăр ҫын алă пуснă.

РАБОЧИСЕМПЕ ХРЕСЧЕНСЕН ХĔРЛĔ ÇАРĔПЕ ТИНĔС-ÇАР ФЛОЧĔ XX ÇУЛ ТУЛТАРНИ

Оборонă Халăх Комиссарĕ Совет Сойузĕн Маршалĕ К. Йе. ВОРОШИЛОВ йулташ

Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейецсен депутачĕсен Мускав Совечĕ общчествăлă организацисемпе тата çар чаçĕмпе пĕрле Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ XX çул тултарнă йатпа туса ирттернĕ чаплă ларура каланă сăмах

(Малали. Пуçламăшĕ ĕнерхи 47(4860)-мĕш номĕрте)

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ çĕнтерӳлĕ пулни, вĕсем вăйлă пулни тата малашне те вăйлă пуласси, вĕсем, çар техникипе лайăх хĕçпăшалланни ĕр пуçне тата—Маркс—Енгелс—Ленин—Сталин аслă идейисемпе хĕçпăшалланнинчен, килет, вĕсен ĕçĕн кашни утăмĕ хамăр парти влиянийĕ витĕр çапнинчен, вĕсене граждан вăрçинче пролетарилĕ револљуция аслă стратегĕсем—Ленинпа Сталин йертсе пынинчен килет. (Алă çупаççĕ).

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ çарĕ пĕтĕм çĕршыв ӳсĕмĕпе пĕрле ӳссе тĕрекленчĕ

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ çак пĕтĕм 20 çул хушшинче партипе правителствă йертсе пынипе, хамăрăн Сталин йулташ çивĕч пăхса, хăй тӳрех асăрхаса тăнипе çирĕпленсе тата çĕнелсе пычĕç, хаљхи вăхăт тĕлне вĕсем кучухнехи лайăх техникăпа авăрланна хĕçпăшаллă вăй, ун çине пирĕн парти тата рабочисемпе хресченсен правителстви хунă историлĕ задачăсене пурнăçа кĕртме тивĕçлĕ пулса тăчĕ. (Алă çупаççĕ).

Хамăр çĕршывăн хĕçпăшаллă вăйĕсен строителствинче 20 çул хушшинче тунă пысăк çитĕнӳсене, епĕр, социалисăмла стройра хăйĕнче Совет государствин пĕтĕм тăвăмлă вăйĕсене чечекленме май паракан вĕçĕмсĕр хăват пулнипе тунă; социалисăмла государствă хăй 20 çул хушшинче хăватлă, кулљтурлă, пĕрмайах чечекленсе пыракан социалисăмла державă пулса тăнипе тунă.

Сталинла икĕ пиатилеткă çулĕсем хушшинче пирĕн çĕршывăн пурнăçĕнче нумайĕшĕ тĕпренех улшăнчĕç.

Çак çулсем пирĕн социалисăмла индустрин тата колхозлă йалхуçалăхĕн хăватлă ӳсĕмĕсен çулĕсем пулнă. Çак çулсенче промышленнăçăн чи кирлĕ пайĕсене çĕнĕрен организациленĕ йе пĕтĕмпех çĕнĕрен туса лартнă.

Çаксем пурте Çарпа Флота техникăпа хĕçпăшаллантарас ĕçре палăрса тăнă, çаксем пурте пирĕн хĕçпăшаллă вăйсене пĕрмайах ӳстерсе, тата та çĕнетсе пымали шанчăклă никĕс пулса тăраççĕ.

Йулташсем! Епĕр буржуалă, империалисăмлă çĕршывсен кучухнехи çарĕсем мĕнле иккенне лайăх пĕлетпĕр.

Вĕсем, чи малтан, тĕрлĕ конструкцисенчен тата вăрçăра мĕнле вырăнта тăмалине палăртса хунă çар машинĕсенчен тăраççĕ. Нумайах та пулмасть, буржуалă çарсен уйрăм специалисĕсем—танксемпе авиаци апологечĕсем машинăсем хыççăн çав тери кайнипе, машинăра пур инкексенчен те тата пурĕ пĕрех пулас револљуцирен те çăлăнăç курнă. Вĕсем çар машинĕсенче нумай мĕлйунлă çар тытассинчен çăлăнăç курнă, мĕншĕн тесен вăл çарсем халĕ те пит пăхăнсах каймаççĕ; вĕсем пуç пулса тăракан буржуалă строй шанчăклă çынсенчен тунă машиналă пĕчĕк çарсем тăвасси çинчен ĕмĕтленнĕ. Анчах та çакăнтан çырнисемсĕр тата калаçнисемсĕр пуçне урăх нимĕн те тухман. Халĕ капиталисăмла çĕршывсенчи правителствăсемпе генераљнăй штабсем пурте çак правилăна йышăнса, ăна пурнăçа кĕртеççĕ: ытларах çар машинĕсемпе кучухнехи хĕçпăшал пултăр, анчах обиазателнă чи пысăк, буржуалă государствă хăй тытма вăй çитернĕ чухлĕ пысăк çар пултăр. Çакăн пек пысăк çар чухне империалиссем нумай мобилизациленĕ çарпа пур-пĕрех çыхăнса тăракан „йăнсăртран пулакан ĕçсем" пулма пултаракан хăрушлăх çинчен тăракан ыйтăва (револљуци тесе вулăр) мĕнле татса панине курăпăр, ку ĕнтĕ вĕсен ĕçĕ.

Империалисăмла буржуази, уйрăмăнах унăн фашисла пайĕ, хĕçпăшалланас ыйтусенче, çăварлăха хыпса курчĕ тесе калама пулать. Халĕ ĕнтĕ буржуалă государствăсем хушшинче хĕçпăшалланас йенĕпе пĕр пĕринчен иртсе кайасси çеç мар, темĕнле, тискер сикĕм пырать. Хĕçпăшалланма нимĕн йĕркесĕр укçа тенкĕ пĕтереççĕ, çапах та пурте çапла кăшкăрма пăрахмаççĕ: сахал, сахал, парăр ытларах!

Нимĕн йĕркесĕр хĕçпăшалланнипе буржуази тĕнчери вăрçа организацилет, çак вăрçă кирек хăш вăхăтра та пуçланса кайма пултарать. Фашисла çĕршывсем организациленĕ тата вĕрсе çĕклесе йанă вăрçă пушарĕ—хĕвеланăçĕнче те, хĕвелтухăçĕнче те пĕтĕм тĕнчипе сарăлса кайассипе тата çавăрса илессипе хăратать.

Пирĕн Совет çĕршывĕ те хăй çине йаланах тапăнас хăрушлăхра пурăнать. Унтан хăраççĕ, ăна пуринчен ытла империалиссем курайманççĕ, вăл фашисла çулпуçĕсен тата вĕсен, фашиссен хуçисен пырĕ çине урлă тăчĕ. Вĕсем пире пĕр кашăк шыв çинче антарса йама хатĕр.

Пирĕн Çарпа Флот, йулташсем, агреcсишĕн мар. Халĕ Ку пĕчĕк ачана та паллă. Вĕсем никам çине те тапăнма хатĕрленмеççĕ. Анчах та вĕсем пулса пыракан ĕçсем çине вичкĕн пăхаççĕ, çивĕч асăрхаса тăраççĕ, тăшмана хамăр чикĕсем урлă каçармасăр кашни минутра пĕтерсе хума хатĕр тăраççĕ, ку вăл вĕсен тӳрĕ тата таса обиазаннăçĕ. Çарпа Флота социалисăмла совет государствине сыхласа усрама тунă. Анчах вĕсем, пăшăрханмала пулин те, кирек-мĕнле буржуази çарне те, йе вĕсен ушкăнне, пирĕн тăван çĕршыв çине тапăнассине хăйĕн хăватне тата хăйĕн вăйне тăшман çарĕсене хирĕç тăратнисĕр пуçне урăхла чарма пултараймаççĕ. Акă мĕншĕн пирĕн Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ хăйĕн капиталисăмла кӳршисен çарĕсемпе флочĕсенчен нихăш йенчен те начар, вăйсăр пулма пултараймаççĕ, пулма права та çук.

Хамăрăн хĕçпăшаллă вăйсене епĕр тивĕçлĕ йĕркене кĕртнĕ, вĕсене кирек-мĕнле капиталисăмла çĕршывринчен те начар мар машинлатнă. Епĕр пĕлетпĕр, партипе правителствă, пирĕн аслă Сталин пирĕн Çарпа Флота малашне те пĕрмайах вĕрçĕнĕ техникă илсе тăччĕр тесе, çапла вара, социалисăмăн хĕçпăшаллă вăйĕсем чи хăватли, чи машинăли çавăнпа та нихăçан, ниçта никам çĕнтерейми вăй пулччĕр тесе пурне те тăвĕç. (Нумайччен алă çупаççĕ).

Çуран çар вăйĕсем

Пирĕн çуран çарсен кучухнехи хĕçпăшал тата кирлĕ таран пур.

Пирĕн çуран çар дивизисем çар техникипе авăрланнипе хĕçпăшалланни хаљхи вăхăтра тивĕçлĕ вырăнта пулмала, чи малта тăракан капиталисăмла çарсен дивизийĕсенчен кайра тăмала мар.

Хĕрлĕ Çарăн çуран çарĕсемпе пĕтĕм Совет çĕршывĕ мухтанма тивĕçлĕ. Пирĕн танксем, авиаци, çапăçун ытти çĕнĕ хатĕрĕсем темĕн чухлĕ пулсан та, çуран çар çав-çавах çарăн тĕп вăйĕ пулса пырать. Çуран çарсăр танкăсем те, авиаци те, утлă çар та çапăçу тата вăрçă задачисене пĕтĕмпех татса пама пултараймаççĕ.

Пирĕн мухтанман, анчах питĕ паха стрелоксемпе командирсем маневăрсенче те, совет чиккисене сыхланă чухне те çар ĕçне питĕ лайăх вĕреннин тĕслĕхне, хăйсен паттăрлăхне, тӳсĕмлĕхне, куçса çӳреме пултарнине, çирĕплĕхне, çапăçма хатĕр тăнине кăтартаççĕ. Епир пĕлетпĕр, çуран паттăр çарсем, хăйсем начар хĕçпăшалланнă пулнă пулсан та, граждан вăрçинче çĕнтерӳсен тĕп вăйĕсем пулчĕç. Вĕсем малашне те тăшманшăн хăрушă вăй, Совет Республикин шанчăклă хуралĕ пулаççĕ.

Артиллери

Артиллери, çĕнĕ танксемпе авиаци пек тăшмана çĕмĕрмели çĕнĕ вăрçă хатĕрĕсем пур пулсан та, кучухнехи вăрçăра тĕп çарсенчен пĕри пулать. Çакăн пек пулнине Испанири тата Йапонипе Китай вăрçисем лайăх çирĕплетеççĕ. Вăл хаçат-журналсем çырнă тăрăх, вăрçă операцисенче тĕп вырăнсенчен пĕрне йышăнать. Çавăнпа та епĕр, çарта çĕнĕ хĕçпăшал ĕçне вăйлатнипе пĕрлех, артиллери çине йаланах тимлĕн пăхнă, малашне те тимлĕн пăхатпăр. Çак ĕçпе Сталин йулташ хăй тӳрех хутшăнса ĕçленни çинчен калани те çителĕклĕ. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Пирен артиллерин личнăй составĕ çителĕклĕ хатĕрленнĕ, хăйĕн ĕçне лайăх пĕлет. Лайăх артиллерис, уйрăмах артиллери командирĕ пуласси—пур йенчен те пысăк вĕреннĕ çын пулмалине пĕлтерет.

Командирпа боецран артиллери пек ăспуç ирĕк, пĕлӳ дисциплинине ыйтакан хĕçпăшал вăйĕ урăх çук та пулмалă. Хĕрлĕ артиллерин рабочисемпе хресченсенчен тухнă командирсемпе боецсем хăйсен çар техникине лайăхрах пĕлессишĕн ырми-канми ĕçлеççĕ, вĕсем ку ĕçре начар мар резуљтатсем тăвасçĕ. Пирĕн артиллери ӳсет, лайăхланать, хăй умĕнче тăракан пысăк задачăсен çӳллĕшĕнче тăрать.

Утлă çар

Утлă çар тĕнчери пур çарсенче кризис пурăнса иртерет, тĕрĕсрех—пурăнса иртернĕ, утлă çар чылай çарсенче пĕтсе ларнăпа пĕрех. Тĕнче вăрçи, позицилĕ вăрçă опычĕ, уйрăмăнах вăрçă хыççăнхи вăхăтра авиаци, танк ĕçĕ вăйланса кайни, кучухне вăрçă фрончĕсене артиллерипе тата пулеметпа хĕçпăшаллантарни—çаксем пурте вĕсем капиталисăмла нумай çĕршывсен генераљнăй штабĕсене пулас вăрçăра утлă çар хăйне валљи вырăн тупаймасть тенĕ шухăш патне илсе пынă.

Епĕр кун пирки урăхла шутлатпăр. Паллах, пулас вăрçăсенче утлă çарăн ĕçĕсен условисем ĕлĕк пулнисенчен тĕпренех уйрăм пулаççĕ, ĕлĕк уй-хир патши йатне панă халĕ ун патне пĕтĕмпех пыраймасть. Ку пуриншĕн те, уйрăмах—хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсемшĕн паллă. Анчах, çапла пулин те, пирĕн мухтавлă утлă çар хăй çинчен, вăл хăватлă Хĕрлĕ кавалери пулни çинчен пĕрре çеç мар калаçтарĕ, тесе шансах тăратпăр Пирĕн утлă çара пĕтĕмпех кучухнехи условисене шайлă урăхлатса çĕнетнĕ. Вăл авиацирен, танкăран хӳтленме пултарать, ăна çарăн ытти вăйĕсемпе пĕрле пулса вăрçăри пысăк задачăсене хăй тĕллĕнех татса памала тунă. Пирĕн чикĕсем, йулташсем, питĕ вăрăм, Совет Государствин тăшманĕсем те сахал мар. Çавăнпа та Хĕрлĕ утлă çарăн, унăн мухтавлă боецĕсемпе командирĕсен хăйсен вăйне ăçта хумали пур, Хĕрлĕ кавалери ĕлĕкхи пекех çĕнтерӳлĕ, тăшмана çапса çĕмĕрме пултаракан хĕçпăшаллă вăй пулнине, вăрçăн пур фрончĕсенче те пысăк задачăсене татса пама пултарнине кăтартмали пур. (Алă çупаççĕ).

Механизациленĕ çарсем тата танк чаçĕсем

Мотомеханизацилĕ чаçсене епĕр империалисăмла вăрçă опычĕ тăрăх тата Испанипе Китайри вăрçасене шута илсе тăватпăр. Епĕр çавăн пекех хамăрăн чикĕсен хăйсене уйрăмлăхсене те шута илетпĕр, ытти йышши çарсене организацилес ĕçри улшăнусене хисепе илетпĕр.

Хаљхи вăхăт тĕлне пирĕн хисеплĕхпе пахалăх тĕлĕшĕнчен çителĕклĕ таран йурăхла мотомеханизацилĕ тата танк çарĕсем пур.

Çак çарсен личнăй составĕ хăйĕн техникине вĕреннине, чăтăмлă пулниче пур ученисемпе маневăрсенче те тивĕçлипе кăтартать. Мухтавлă танкиссем хăйсен танкĕсене пит те лайăх пĕлеççĕ, час-часах хăйсен ĕçĕсене тĕлĕнмеле ăста пелеççĕ, йуратаççĕ. Танк çарĕсем вăрçăра пысăк вырăнта тăраççĕ, çакна халĕ Испанирипе Китайри вăрçăсем лайăх кăтартаççĕ.

Епĕ сире çакна шанса калама пултаратăп, йулташсем, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн танк çарĕсем хамăр чикĕсене сыхлама пирĕн тăван çĕршыв çине тапăнна тăшман çине сиксе ӳкме йаланах хатĕр. (Алă çупаççĕ).

Хими чаçĕсем

Вĕсем оборонă тĕлĕшĕпе вырăн йышăнаççĕ. Паллă, 1925 çулта епĕр Женевăра вăрçă чухне химипе бактереологи хĕçпăшалĕсемпе усă урма чаракан протокол çине ал пусрăмăр Совет государстви хăй çине илнĕ пĕтĕм тĕнчери обиазателствăсене тӳррĕн пурнăçа кĕртсе пырать. Анчах шел, хăш-пĕр государствăсем тата правителствăсем ун пек актсем çине урăхла пăхаççĕ. Уйрăмăнах вăл йапала çине фашисла державăсем пăхни хăрушă. Акă мĕншĕн пирĕн хими çарĕсем хатĕрлес программăна химипе тапăнассинчен сыхланмали чаçсем çеç хатĕрлес виçерен тухакан пайсем хушмала пулчĕ. Епĕр хамăр çине кĕтмен çĕртен тапантарасшăн мар, ун пек тума пирĕн права та çук.

Хими чаçĕсем ытти çар вăйĕсемпе пĕр харăссăн пыраççĕ, вĕсем нумай ĕçлеççĕ тата начар мар ĕçлеççĕ, агрессилĕ тăшман хăçан та пулсан пирĕн çарсене хими йапалисемпе сирпĕтме шутласан, вăл хăй пуçĕ çине те çавăн пек хăрушă хими ответне илĕ. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Сывлăш çар вăйĕсем

Партипе правителствă, уйрăмăн Сталин йулташ, сывлăш çар вăйĕсене вăйлатасси çине йаланах пысăккăн пăхнă, пысăккăн пăхаççĕ. Паллах, пулас вăрçăра авиаци чаçĕсен ответлă, нумай йенлĕ тата çав вăхăтрах хăй тĕлĕн пысăк ĕçсем тумала пулать. Вĕсем çине ытти çарсемпе çыхăнса тапăнас задачăна çеç мар, стратегиле задачăсене хăйсем тĕллĕн пурнăçа кĕртессине татса парассине те хунă. Халĕ Испанире Франко, Китайра йапонцăсем хăйсен авиаци вăйĕпе пулăшу ĕçĕсене тунă çĕрте çеç мар, пысăк оперативлă задачăсене пурнăçа кĕртнĕ çĕрте те усă курма тăрăшаççĕ.

Хаљхи вăхăтра авиаци хăйĕн пысăк пултарулăхĕпе кашни агрессăр аллинче чикĕсем пулнине пахмасăр урăх государствă çине тапăнмали вăй пулса тăрать.

Совет Сойузĕн нумай капиталисăмлă государствăсемпе чикĕ пур. Пирĕн йаланах кирлĕ пек сыхă тăмала. Пирĕн чикĕ лешйенче авиаци мĕнле ӳссе пынине тĕплĕн пăхса, сăнаса тăмала. Буржуалă çĕршывсенче вăрçа хатĕрленесси уйрăмăнах—авиаци строителстви йенĕпе пулса пырать. Буржуалă, уйрăмăнах фашисла çĕршывсем пĕр-пĕринчен вăйлă пуласшăн хăйсен унсăрăнах вăйлă авиаци вăйне ӳстерме укçа тенкĕ те, вăй та шеллемеççĕ. Паллах, йулташсем, епĕр хĕçпăшалланассишĕн пыракан тавлашусенче тăмастпăр. Анчах та, епĕр чикĕ лешйенче пулса пыракан ĕçсене курмасăр, илтмесĕр тăма пултараймастпăр. Епĕр Совет Сойузĕн сывлăш флочĕ хăй вырăнĕнче пулмала тăватпăр. Епĕ, пирĕн сывлăш вăйĕсем ытти ватăрах çар вăйĕсенчен йулмаççĕ, хăшпĕр йенĕсемпе иртсе те кайаççĕ, тесе калама пултаратăп. Ку ĕç те Сталин йулташ хăй çирĕппĕн йертсе пынипе пулса пырать. (Алă çупаççĕ).

Пирĕн чаплă љотчиксем—Совет халăхĕн мухтавлă ывăлĕсем совет самољочĕсем çинче хăйсене пĕр хут çеç мар ĕнтĕ чăн-чăн геройсем пулнине кăтартрĕç. Пирĕн љотчиксем авиаци ĕçĕн техникине кирлĕ пек пĕлеççĕ: вĕсем ăна, партире тăракан тата партире тăман бољшевика, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн боецне пĕлме кирлĕ таран пĕлеççĕ тата йуратаççĕ.

Совет љотчикĕсем ăсхакăл йенĕпе çирĕп, вĕсем сталинла çирĕп вăйлă. Вĕсем хăйсем мĕн тума пултарнине ĕçпе кăтартаççĕ. Љотчиксем—Совет Сойузĕн Геройĕсем—хамăрăн çĕршывăн чиккисем лешйенче те палла тухнă геройсем пулса тăраççĕ. Вĕсем çĕнтерейми сывлăш çутçантăлăкне çĕнтерекенсем, совет халăхĕн çирĕплĕхне, тереклĕ вăй хăватне, хамăрăн Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн пысăк вăйне кăтартаççĕ. (Нумайччен алă çупаççĕ).

Ытти çар вăйĕсем

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн хисепĕнче тĕп çар вăйĕсемпе пĕрлех вĕсене пулăшакан çар вăйĕсем—çыхăну, инженерлă, чукунçул, сывлăшран тапăнассинчен сыхлакан тата ытти çар вăйĕсем те пур. Вĕсем çинчен сахал калаççĕ, вĕсем мухтанмаççĕ, анчах вĕсем ытти çар вăйĕсенчен кайа мар кирлĕ. Вĕсем те, ытти вăйсем пекех лайăх çар вăйĕсем. Кунти çынсем те чаплă, нумай ĕçлекен, хăйсен ĕçне пĕлекен çынсем.

Тинĕс флочĕ

Капиталисăмла çĕршывсем çуран çар тата сывлăш вăйĕсене вăйлатнипе пĕрлех, тинĕс çинче те татти-сыпписĕр хĕçпăшалланса пыраççĕ.

Пирĕн çĕршыва вунщар пин километр хушши тинĕссемпе океансем çуса тăраççĕ. Хамăрăн тинĕс чиккисене сыхласси çăмăл ĕç мар. Çавăнпа партипе правителствă хамăрăн Тинĕс-Çар Флочĕ тата шыв хĕррисене хуралласси çине пысăккăн çавăрăнса пăхаççĕ.

Хаљхи вăхăтра Тинĕс-Çар Флочĕ пысăк вырăн йышăнакан паллăлăхра тăрать. Вăл хамăрăн сывăхри тата инçетри тинĕс чиккисене шанчăклăн сыхласа тăма кирлĕ таран вăйлă. Партипе Совет правителстви тăрăшнипе, Сталин йулташ йаланах сăнаса, тĕрĕслесе, пынипе, хамăрăн Тинĕс-Çар Флотне çитес кĕске çулсем хушшинчех çĕршыв умĕнче тинĕс чиккисене сыхлас йенĕпе тăракан задачăсен çӳллĕшне çитĕнсе ӳсме тивĕçлĕ майсем туса çитерне.

Партипе правителствă, Тинĕс-Çар Флотне малашне те вăйлатсах пыма, Тинĕс-Çар Флотне хăй тĕллĕн Сойузри Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссариатне уйăрма кирлĕ тесе йышăнчĕç.

Тинĕс-Çар Флочĕ, унăн чаплă кадрĕсем—краснофлотцăсем, командирсем, политработниксем йаланах Совет Сойузĕн хĕçпăшаллă лайăх чаçĕсем пулнă. Халĕ Тинĕс-Çар Флочĕ уйрăм Халăх Комиссариачĕ пулнă хыççăн, унăн чаплă çыннисем вăйлă Хĕрлĕ Тинĕс-Çар Флот строителствинче кĕске срукрах пысăк çитĕнӳсем тума кирлисене пурне те турĕç. (Алă çупаççĕ).

Епĕр Тинĕс-Çар Флочĕн йышне лайăх пĕлетпĕр, унăн паттăрлăхне, пултарулăхне, вăл социалисăм ĕçне, Ленинпа Сталин парти ĕçне чĕререн йуратнине пĕлетпĕр. Çавăнпа епĕр Петр Александрович Смирнов йертсе пыракан Тинĕс-Çар Флот Халăх Комиссариачĕ хăйĕн умĕнче тăракан задачăсене хăвăрттăн пурнăçа кĕртессине шансах тăратпăр. (Алă çупаççĕ).

Йулташсем! Пирĕн пĕтĕм социалисăмла индустри тата чи малтан оборонă промышленнăç халăх комиссариачĕ Хĕрлĕ Çара тата Тинĕс-Çар Флотне вăйлатса хĕçпăшаллатса пырас çĕрте пысăк ĕçсем тунă, пысăк ĕçсем тусă пыраççĕ.

Икĕ сталинла пиатилеткăсен çĕнтерӳвĕсен никĕсĕ çинче пирĕн хĕçпăшаллă вăйсене техникă йенчен тĕпрен реконструкциленĕ, Социалисăмла фабриксемпе заводсем Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне тĕрлĕрен тĕслĕ кирлĕ çар техникине парса пычĕç, парса пыраççĕ те.

Пайан, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс Çар Флочĕ хăйсен йубилей кунĕнче, пĕтĕм стахановец рабочисене, инженерсене, техниксене тата руководителсене, уйрăмăнах çар промышленнăçне,—вĕсен Совет Сойузĕн хĕçпăшаллă вăйĕсене тăвас çĕрте нумай тата лайăх ĕçлерĕç,—красноармейцăла тав тăваççĕ. (Алă çупаççĕ). Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ çапла сăмах параççĕ: вĕсем хăйсем илнĕ пĕтĕм хĕçпăшалсене пĕлсе тыткалĕç, тăшман вĕсемпе ĕçре усă курмала тусан—хĕçпăшалăн пĕтерсе хуракан пĕтĕм пултарулăхĕпе усă курĕç. (Алă çупаççĕ).

Красноармейцăсем, краснофлотцăсем, командирсем тата начаљниксем

Йулташсем!

Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флотăн вăйхăвачĕ хĕçпăшаллатнинче тата специаљнăй техникăра анчах мар, унта çеç мар, унăн вăйхăвачĕ совет çыннисенче, кадрсенче-командă, начаљствă тата политсоставсенче, рйадовой боецсенче.

„Кадрсем пур ĕçе те татса параççĕ"—тет Сталин йулташ. Çак сăмах пĕтĕм ĕçсемшĕн çирĕп чăнлăх пулсан, пирĕн çĕршывăн хĕçпăшаллă вăйĕсем йенĕпе илсен вара çак чăнлăх тата та ытларах пысăкланать.

Хаљхи вăхăтра пирĕн хĕçпăшаллă вăйсен кадрĕсем мĕнле тăраççĕ-ха? Епĕ шутлатăп:

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн боецсем, командирсем, политработникĕсем—хăйсен халăхĕн лайăх ывăлĕсем, хăйсен пĕтĕм чĕрипе, пĕтĕм пурнăçĕпе Тăван аслă çĕршывшĕн тăракансем, социалисăмăн аслă ĕçĕшĕн чăн-чăн кĕрешекенĕсем, хăйсене шанса панă ĕçе пĕтĕмпех çĕнсе илессишĕн ывăнма пелмесĕр ăнăçулă ĕçлесе пыракансем, хăйсен Тăван çĕршывне йаланах кирлĕ пек сыхласа тăма хатĕрленсе пыракан çынсем пулни çинчен каласа тăма та кирлĕ мар пулĕ тесе шутлатăп.

Хĕçпăшаллă вăйсене тăвас ĕçре малтанхи çулсенче пулнă тĕп йăвăрлăхсенчен пĕри—хамăрăн çар йенĕпе вĕрентсе хатĕрленĕ командă тата начаљствă составĕсене хатĕрлесси пулнă.

Граждан вăрçи çулĕсенче командирсем вырăнĕнче кивĕ çарофицерĕсем, унтер-офицерсем, салтаксем, тата нумай чухне çар ĕçне вĕренмен малта пыракан рабочисемпе хресченсем пулнă. Анчах вăл вăхăтранпа нумай шыв йухнă, вара патша салтакĕсемпе, унтерсем пулнисем, такçан ахаљ рабочисемпе хресченсем пулнисем вĕреннĕ çынсем, çар ĕçне пĕлекен хĕрлĕ командирсемпе начаљниксем пулса тăчĕç.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн тата Тинĕс-Çар Флочĕн хаљхи вăхăтра кашни çулах пĕр пин кăна мар командирсене инженерсене, врачсене тата ыттисене вĕрентсе кăларакан специаљнăй аслă шкулсем 12 пур.

Иулашки вунă çул хушшинче çар училищисем Çарпа Флота кашни çулах вунщар пин командирсем тата техниксем парса тăраççĕ.

Командăла кадăрсене формироваť тăвас ĕçре тунă паллă çитĕнӳсенчен пĕрине епĕр, çирĕп, хăйсен ĕçне пĕлекен, политикăна пĕлекен кĕçĕн командирсен кирлĕ кадрне хатĕрленине шутлатпăр. Пирĕн кĕçĕн командир вăл красноармейсăн çывăх, уншăн тăрăшакан, йулташĕ анчах мар, вăл унăн çар веренӳвĕнчи тата ĕçри йаланхи йулташĕ, учителĕ тата тусĕ. Кĕçĕн командир вăрçăра питĕ пысăк тата чи кирлĕ вырăн йышăнать. Ку кадрсене епĕр вĕрентсех тата ӳстерсех пыратпăр. Вĕсенчен çĕршерĕн пиншерĕн кирĕ хатĕрленӳ илсе лейтенантсем пулса тухаççĕ.

Хĕрлĕ Çарпа Флот боецĕ йаланах, уйрăмăнах йулашки çулсенче хăйĕн ĕçне пĕлекен воин, револљуцин дисциплинăлă салтакĕ, хăйĕн Тăван çĕршывĕпе социалисăм ĕçĕшĕн чĕререн тăракан паттăр. Ӳстерсе каласинчен хăрамасăр, тӳрех калăпăр—пирĕн красноармейцăсемпе краснофлотцăсем пек лайăх çынсене шутласа кăларма йавăр.

Пирĕн пур степенлĕ тата ранглă командир тата красноармейăпа краснофлотцă клас тĕлĕшĕпе пĕр тăван. Вĕсен интересĕсем пĕрре, вĕсем социалисăмăн пĕр аслă ĕçне тăваççĕ, хăйсен Тăван аслă совет çĕршывĕшĕн тăраççĕ. Вĕсем пĕр çĕре пĕтĕçнĕ тăванла пĕр çемйе пулса тăраççĕ.

Хĕрлĕ Çар çыннисем—пирĕн çĕршывăн малта пыракан çыннисем.

Буржуази çарĕнчи салтак ĕçхалăх коллективĕн пурнăçĕнчен тухса ӳкет. Буржуази саккунĕсем çар тулашĕнчен тĕрлĕ шухăшсем кĕрессинчен сыхлас ĕçе тăваççĕ. Çар политикă тулашĕнче—буржуазин суйа девизĕ çавăн пек.

Салтак массисем анчах политикă тулашĕнче, вĕсен гражданла права та, тата государствă пурнăçĕн ĕçне мĕнле те пулин хутшăнма права та çук, анчах та вăл буржуази тата ăна пăхăнакан начаљниксен аллинче итлекен вăй пулать.

Пирĕн Çарпа Флот хăйсен çĕршывăн пĕтĕм пурнăçĕпе пурăнаççĕ. Советăн пирвайхи парламентĕнче—ССР Сойузĕн Верховнăй Советĕнче—Хĕрлĕ Çарпа флотран депутатсем 86 çын. Ĕççыннисен ытти представителĕсемпе пĕрле вĕсем Совет государствин ĕçĕсене туса пыма, нумай мĕлйунлă совет çĕршывне йертсе пыма суйланăскерсем.

Боецсемпе командирсем Хĕрлĕ Çарпа Флотра пулнипе хăйсен пурнăçĕн строителĕсем пулма пăрахмаççĕ. Унтан та ытларах. Вĕсем Хĕрлĕ Çарта пулса социалисăмла çĕнĕ çынсен кирлĕ пахалăхсене çитĕнтерсе пыраççĕ. Çамрăк рабочи, хресчен йе служащи çар службинче пулнă çулсенче палламала мар улшăнать. Хăй Хĕрлĕ Çарпа Флот службине пĕтерсе тухас умĕн вăл политикăна вĕренсе çитĕннĕ, кирлĕ пĕлӳве çителĕклĕ илнĕ, кулљтурлă, коммунисăм ĕçĕшĕн, социалисăмла Тăван çĕршывăн ĕçĕшĕн чĕререн тăракан çын пулса çитет. Вăл çар запасне дисциплинăлă труженик, хăйĕн социалисăмла çĕршывне тата етемĕн телейлĕ пурнăçне чĕререн йуратакан çын пулса тухать.

Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флот социалисăмла кулљтурăпа социалисăмла çутĕçĕн шкулĕ пулса тăраççĕ.

Вĕсен тĕрлĕрен кулљтсут учреждениисем нумай, çаксем вара боецпа командира пĕр майах ӳссе пыма май параççĕ. Хĕрлĕ Çарпа Флот çурчĕсем, клубсем, библиотекăсем, çаксем, чăннипе илсен, красноармейцăсемпе краснофлотцсен университечĕсем; унта пур йенĕпе те—çар, политикă, обшчеобразователнăй предметсемпе вĕрентес ĕçе сарса йанă.

Çак ĕçре епĕр Хĕрлĕ Çарпа Флота Хĕрлĕ Çарпа Флотăн шефĕсем—ăслăлăхпа искусствă çыннисем—хăйсен лекцийĕсемпе, доклачĕсемпе тата совет искусствин лайăх кăтартăвĕсемпе пысăк тата хаклă пулăшу кăтартнине ырăсласа палăртатпăр. (Алă çупаççĕ).

(Йулашки 4-мĕш страницăра).

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ XX çул тултарни

Оборонă Халăх Комиссарĕ Совет Сойузĕн Маршалĕ К. Йе. ВОРОШИЛОВ йулташ сăмахĕн йулашки

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн боецĕсем, пĕтĕм личнăй составĕ çакна лайăх пĕлеççĕ: вĕсем кулҍтурăлă, политикă йенĕпе ăнланулă пулсан анчах, хамăр çĕршывпа çарăн техникăла вăйхăвачĕпе пĕлсе тата туллин усă курма, пулас çапăçусенче хăйсен Тăван çĕршывĕшĕн социалисăмшăн империалиссене, фашиссене хирĕç çапăçура хăвартăн çĕнтерме пулаť.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн сыннисем—пирĕн тăван çĕршывăн çирĕп тата шанчăклă хуралçисем. Вĕсем хăйсен çĕршывĕн хĕçпăшаллă пултарулăхне тата çапăçу пултарулăхне çирĕплетсе пырас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлеççĕ. Вĕсенчен пĕр пинне кăна мар Совет правителстви государствăн пысăк наградисене парса паллă тунă.

Хĕрлĕ Çар ретĕнче Совет Сойузĕн Геройĕсем 55. (Алă çупаççĕ). Пирĕн паттăр халăх хушшинче герой пуласси вара—Совет Сойузĕн нумай пинлĕ лайăх сыннисем хушшинче йăлана кĕнĕ.

Хĕрлĕ Çарпа Флот боецĕсен тата командирсен паттăрлăхĕ, хăйулăхĕпе хастарлăхĕ—вĕсем пирĕн коммуниссен партине чĕререн йуратнинчен, хăйсен тăван çĕршывне, хăйсен халăхне тата аслă Сталина вĕçĕ-хĕррисĕр йуратнинчен тухса тăраççĕ.

ССР Сойузĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен кадрĕсем хăйсен болҍшевикла идейлăхĕпе тата социалисăмла ăнланувĕпе вăйлă. Пирĕн болҍшевиксен партийĕ тата унăн çарти организацийĕ çакă социалисăмла ăнланупа, революцилĕ задачсене ăнланса илнипе Хĕрлĕ Çара хĕçпăшаллантараť.

В. И. Ленин тата Сталин йулташ пĕрре çеç мар, Хĕрлĕ Çарăн граждăн вăрçи фронтĕнче тунă çĕнтерӳвĕсем—çарти коммуниссем хăйсене пĕр шеллемесĕр кĕрешнипе тата социалисăмла вĕрентес, массăсене организацилес ĕç пулнипе çеç пулма пултарни çине кăтартса пачĕç, ку ĕçсене парти организацисем, политоргăнсем тата çар комиссарĕсем красноармейцăсемпе командирсем хушшинче туса иртернĕ.

Халҍхи вăхăтра пирĕн çарти парти организацийĕ нумай йышлă, çирĕппĕн пĕтĕçнĕ, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн чĕререн тăракан паттăр отрйад пулса тăраť. Вăл, пурнăçа, хĕçпăшалланнă вăйсен пĕтĕм ĕçне организацилекен политикпа-моралҍ тĕлĕшенчен тĕп вырăн пулса тăраť.

Çарти парторганизацин пысăк, нумай йенлĕ ĕçĕсенче сывăх помощник, Çарта çур мĕлйун сынна йахăн шутланакан Ленинла Комсомол пулса тăраť. (Алă çупаççĕ). Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн комсомолецсем—ĕçсынни государстви оборонăн пит паха, ылтăн фончĕ. Вĕсем партийцăсемпе пĕр утăмран утса пыраççĕ, умма лартнă тĕлевсене çине тăрса илесшĕн, пур тата пур тĕслĕ йăвăрлăхсене пĕтерме пĕлес, вĕсене хушнă ĕçе пĕтĕм викĕспе алла çавăрса илес, болҍшевиксен партипе хамăрăн социалисăмла Тăван çĕршыва чĕререн йуратассинче паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Пĕтĕм Сойузри Ленинла Комсомол, Тинĕс-Çар Флочĕн тата Сывлăшри вăйсен шефĕ пулса, вĕсене хăйсен задачĕсене пурнăçлас ĕçре пысăк тата пур йенчен те пулăшусем параť.

Округсенчи, флотсенчи çар Совеч-сем, политоргăнсем тата çар комиссарĕсем Çарпа Флотри часçсемпе учреждениесенче, боецсемпе командирсем хушшинче политикă ĕçне туса пырас тĕлĕшпе, хĕçпашаллă вăйсен партилĕ, общесвăлă пурнăçне йертсе пырас тĕлĕшпе пысăк тата тимлĕ ĕç туса пыраççĕ. Мирлă вăхăтри условисенче вĕсен задачĕсемпе вырăнĕ пысăк, вăрçă вăхăтĕнче вĕсем татах та темĕн чухлĕн ӳсеççĕ.

Йулташсем!

Пире пур йенчен те капиталисăмла çĕршывсем хупăрласа тăраççĕ,—кун пирки Ленин темиçе хутчен те каланă, кун пирки пĕрмайах Сталин йулташ калаť. Капиталисăмла çĕршывсем—пирĕн çĕршыва, социалисăм çĕршывне, рабочисемпе хресченсен государствине хирĕçле тĕнче.

Çавăнпа та пирĕн клас тăшманĕсем, чи малтан, тата пуринчен ытла—фашиссем, социалисăмлă Тăван çĕршыва сыхлас ĕçре Хĕрлĕ Çарпа Флот кадăрĕсем мĕнле вырăн йышăнса тăнине пĕлсе вĕсен хушшине кĕрсе кайма, вĕсем хушшинче хăйсен агентурĕсене, шпионсене, тăван çĕршыва сутакансене тата диверсантсене тытса тăма хăтланаççĕ, малашне те, вим умĕнче чарăнса тăмасăр, пурне те тума пăхĕç.

Вăл çавăн пек пулнă та.

Фашиссем тата ытти провокаторсемпе разведчиксем Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарпе Тинĕс-Çар Флот речĕсене хыпаласа пăхма хăтланчĕç.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотĕнче чылай çулсем хушши пытанса, чи хайар, усал тăшмансем, тăван çĕршыва сутакансем, шпионсем: Тухачевский, Гамарник, Йакир, Уборевич, Орлов, Корк, Лудри, Ейдеман, Сивков тата ытти сахал мар, вĕсенчен те кайа мар чи хайар, усал тăшмансем тата тăван çĕршыва пăрахса тăшман йенне куçнă ирсĕрсем сăтăрласа пурăнă.

Çакă фашисла-çар бандийĕ нумай вăхăт хушши хăйĕн сутăнчăклă ĕçĕсене пытарса пурăннă. Вăл бандă хăйĕн тăван çĕршывне, Çарпа Флота вăрттăн сăтăрласа пурăннă.

Тăван çĕршыва пăрахса тăшман йенне куçнăшăн, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарне сутнăшăн фашисла-çар бандичĕсем, тăван çĕршыва сутакансем, шпионсем тивĕçлине илчĕç. Вĕсене çĕр пичĕ çинчен шăлса ыватнă, пĕтерсе хунă. (Чылайчен алă çупаççĕ.)

Фашисла-çар бандине пĕтерсе хунă хыççăн, сутăнчăксенчен, тăван çĕршыва сутакансен ирсĕрĕсенчен тасалнă хыççăн, Хĕрлĕ Çар Ленин—Сталин парти тавра, пирĕн Рабочисемпе Хресченсен Правителстви тавра вĕçĕмсĕр çирĕп, нихăçан пулманниччен ытла пĕрлĕхлĕ пулса пĕтĕççе тăчĕ. (Алă çупаççĕ).

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ хăйĕн аслă совет халăхĕн уйăрлми пĕрлĕхлĕ пайĕ пулса тăнă, пĕрмайах пулаť те.

Тăван çĕршыва сутакансемпе шпионсене, халăхпа Çара тискерĕн ултавакансем урлă Совет Сойузĕн хĕçпăшаллă вăйсен пултарулăхне вăйсарлатма пăхакансене пирĕн государствăн никĕсĕсем айне чакаланма пăхакансене епĕр калăпар:—господасем, йăнăшрар! Сирĕн картăна тата тепĕр хут тĕппипех çапнă. (Тăвăлăн алă çупаççĕ).

Камăн пăсăк чунĕ Тăван çĕршыва тăшмансене сутма хăтланаť, кам клас тăшманĕсемпе кирек мĕнле те пулин килĕшӳ тума хăтланаť, çавсене епĕр асăрхаттаратпăр—халăхра, государствăна хирĕç, тăван çĕршыва пăрахса тăшман йенне куçни, тăван çĕршыва сутни, шпионлă тата ытти çак йевĕрлĕ тискер преступленисем йаланах тата обйазателнă вĕсемшĕн намăс вилĕмпе пĕтĕç.

Йулташсем!

Клас тăшманĕ чейе, намăссăр тата ултавлă, ирсĕр—ку пурне те аван паллă. Вăл хăйĕн хĕçпăшалне пăрахман, нихăçан та пăрахас çук. Çавăнпа та пирĕн йăваш чунлă, маниловщинăлă пулма права çук. Епĕр—Çар сыннисем пире хупăрласа тăракансем çине çĕр хут сисĕмлĕ, асăрханулă, тимлĕхлĕ пулмала, пулатпăр та, хамăрăн ĕçсене лайăх туса пыратпăр, çав ĕçпе пурнăçăн пур йенĕсен ӳсĕмне, хамăрăн Рабочисемпе Хресченсен Çарĕн тата Тинĕс-Çар Флочĕн строителствипе çĕнĕ техникă тĕлĕшĕнчен лайăхлатассипе тытса пыратпăр.

Командирсен, начаҍниксен тата пуринчен ытла политоргăнсемпе комиссарсен пирĕн хушша йутçĕршыв разведкисем килсе кĕрессине, болҍшевикла сисĕмлĕхе хастарлă, анлă организацилĕ ĕçпе сыхăнтарса епĕр хамăра сыхлама пултарнине асра тытса нихăçан та манма йурамаť, çапла майпа çеç епĕр хамăра клас тăшмансем хăйсен вăйсăр наркăмĕшĕпе сийенлеме ирсĕрĕн хăтланнинчен сыхланма пултаратпăр. Политоргăнсемпе комиссарсем нумай ĕçлеççĕ, вĕсен тата нумай тата тĕплĕн тата лайăх ĕçлемеле. Вĕсен Сталин пек ĕçлемеле, ĕçлĕç те (алă çупаççĕ).

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ хăйсен задачисене пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртĕç

Йулташсем!

Совет Сойузĕ йĕритаврах капиталисăмлă государствăсем. Совет Сойузĕ—рабочисемпе хресченсен пĕртен-пĕр государстви, халҍхи вăхăтра çĕр çинче ун пекки урăх çук-ха. Вăл пирĕн социалисăмлă государствă, капиталсăмлă кивĕ тĕнчерен кĕрешсе илнĕ позицисем çинче, етемлĕхĕн малти аванпосчĕ пулса тăраť, çакăнта ĕнтĕ пирĕн рабочисемпе хресченсен тава тивĕçлĕ аслăран та аслă ĕçĕ. Анчах, халҍхи вăхăтра социалисăмлă пĕртен пĕр çĕршыв пулса тăнăран, вăл йĕланах хăй çине тулашран вăрçăпа тапăнас хăрушлăх умĕнчех тăраť.

Сталин йулташ çак иртнĕ кунсенче комсомолец Иванов йулташа панă ответĕнче, сăмах майĕн, çапла каланă:

„Чăнах та, капиталисăмла йĕритавралăх пурри çине куçа хупса пăхни, пирĕн тулашри тăшмансем, тĕслĕхрен, фашиссем май килсен ССРС çине вăрçăпа килме хăтланмĕç тесе шутлани кулăшла та айванла пулнă пулĕччĕ. Çавăн пек шухăшлама суккăр мухтанчăксем, йе халăха сывратма тăрăшакан вăрттăн тăшмансем кăна пултараççĕ."

Сталин йулташ çак сăмахсемпе мĕн кирлине пурне те каласа панă.

Пирĕн Правителствăпа халăхăн чи кирлĕ политики, вĕсем лăпкă саманана йуратни, пирĕн çине вăрçăсемпе килесси пулас çук тесе шанса тăма май памаť.

Пирĕн халăх, унăн хăватлă социалисăмлă государстви, Рабочисемпе Хресченсен Херлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ—ак çаксем пулаççĕ ĕнтĕ пирĕн Тăван çĕршыва хирĕç вăрçăпа килсе тапăнма хатĕрленекен буржуазишĕн, уйрамăнах унăн фашисла пайĕшĕн пĕртен-пĕр чăрмав пулса тăракан вăйсем.

Комсомолец Иванов йулташа панă çав ответрах Сталин йулташ çапла каланă:

„Хамăрăн Херлĕ Çара, Хĕрлĕ Флота, Хĕрлĕ авиацине, Осоавиахима пур майсемпе те вăйлатни тата тĕреклетни кирлĕ. Нимĕнле „ăнсăртлăх" та тата пирĕн тулти тăшмансен нимĕнле фокусĕ ем те пире кĕтмен çĕртен пырса ан тивччĕр, тесе хамăрăн пĕтĕм халăха вăрçăпа тапăнас хăрушлăх умĕнче мобилизацилĕ хатĕр тытса тăмала".

Ак çакă пулаť ĕнтĕ пирĕн государствăн, пĕтĕм халăхăн тулашри политикă тĕлĕшпе, хамăра вăрçăпа килсе тапăнассинчен сыхланас ĕçре туса пымали ĕçсен программи, пирĕн государствăла халăхăн политикăла йевангелийĕ. (Алă çупаççĕ).

Сталин йулташăн сăмахне итлесе, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ—Совет Сойузĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕтĕм личнăй составĕ хăйсен речĕсене тата ытларах вăйлатас, çирĕплетес тĕлĕшпе хăйсенчен мĕн килнине йăлтах тăвĕç, хăйсен çапăçушăн кирлĕ вăй-хăватне кирлĕ пек лайăхлатса пырас тĕлĕшпе, хамăр çине кирек хăш тĕлтен тапăннă кирек мĕнле тăшмана та кирлĕ пек отпор пама кăна мар, тата ăна хамăр совет çĕрĕ çине кĕме памасăрах пĕтерсе хума йалан хатĕр тăрас, йаланах пултарулă пулас тĕлĕшпе тата ытларах çине тăрса ĕçлĕç. (Алă çупаççĕ).

Йулташсем!

Пирĕн хĕçпăшаллă вăйсем—вĕсем социалисăм ĕçĕшĕн, Ленин—Сталин аслă ĕçĕшĕн кĕрешекен боецсен 2 çĕр çитмĕл мĕлйунлă çарĕн малта пыракан отрйачĕ кăна. Вĕсем хăватлă халăхăн малти ретĕнче тăрса, хăйсем çине Правителствă, парти, аслă Сталин хунă задачăсене пĕтĕмĕшпех те туллин пурнăçа кĕртĕç. (Алă çупаççĕ).

Сывă пулччĕр Рабочисемпе Хресченсен паттăр та чаплă Херлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ! (Чылайччен алă çупаççĕ).

Сывă пултăр аслă, хăватлă, никам çĕнтерейми совет халăхĕ! (Нумай вăхăт алă çупаççĕ).

Сывă пултăр мухтавлă, çĕнтерӳлĕ парти, Ленин—Сталин партийĕ! (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Сывă пултăр пирĕн Аслă Сталин! (Нумайччен чарăнмасăр тăвăллăн ала çупаççĕ, пурте ура çине тăраççĕ, „Сталин йулташа „урра!", „Сывă пултăр социалисăм çĕршывĕн маршалĕ Ворошилов йулташ!",—тесе кăшкăрнă сасăсем илтĕнеççĕ. Залри пĕтĕм халăх Сталин йулташа саламласа оваци тăваť).

Йалхуçалăх мастăрĕсен слҍочĕ

Пайан Шупашкара колхоз уй-хирĕнчен вăйлă тырпул туса илекенсем, уй-хир стахановцисем, йалхуçалăхĕн чи аван представителĕсем, трактористсем, комбайнерсем, вăйлă тырпул мастăрĕсем, социалисăмла выҍăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри стахановецсем слҍота пухăнаççĕ. Слҍотăн тĕп задачĕ—1937 çулти йалхуçалăх итогĕсем çинчен сӳтсе-йавса 1938 çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçе болҍшевикла организацилесси.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре халҍ ĕнтĕ пирĕн опыт пур. Уйрăмăнах 1937 çулта стахановецсем панă опыт пит пысăк. Слҍота пухăннисем хăйĕн лайăх ĕç тĕслĕхĕсем çинчен пĕр-пĕрине пĕлтерсе 1938 çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешме татах та лайăхрах опыт пухса каймала.

1937 çулта пирĕн республикăри колхозсем вăтам шутпа гектартан 15-шер центнер ытларах тырпул пухса илчĕç. Чăваш халăхĕ çавăн чухлĕ тырпул туса илни халиччен пулман. Çавă вăл колхозра пĕрлешсе ĕçленипе, йалхуçалăх машинла техникăпа хĕçпăшалланнипе, стахановла йухăм саралнипе, колхозла хресченсене партипе правителствă йалан пулăшса пынипе çеç пулма пултарнă.

Республикăри уйрăм районсемпе колхозсем татах та пысăк тухăç пухса илчĕç. Вăрнар районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхоз вăтам шутпа гектартан 180-шар пăт илнĕ. Çав колхозрах Тамайев бригади 54 гектар çинчен гектартан 344-шар пăт илнĕ. Храмов бригади 18 гектар çинчен 305-шер сурхи тулă илнĕ.

Патăрйел районĕнче орденоносец Острйаков йулташ йертсе пыракан „Хĕрлĕ туçа" колхозра 600 гектар çĕр çинчен вăтам шутпа гектартан 160-шар пăт тĕштырă пухса кĕртнĕ. Çав районрах „Сăлтăр" колхозра 634 гектар çинчен 150-шар пăт илнĕ.

1937 çулта вăйлă тырпул туса илнĕ колхозсемпе бригадăсем, стахановла звеносем республикăра çĕршерĕн шутланаççĕ. Тĕштырă йенĕпе çеç мар, ытти тĕрлĕ кулҍтурăсем йенĕпе те 1937 çулта нумай колхозсем лайăх тĕслĕх кăтартрĕç.

Вăрнар районĕнчи Ленин йачĕпе тăракан колхозра Широков йулташ звени гектартан 46.7-шер центнер махоркă илнĕ. Çĕрпӳ районĕнчи „Çĕнĕ вăй" колхозра Василйев йул. звени гектартан 8,2-шер центнер йĕтĕн сӳсĕ илнĕ. Йĕпреç районĕнчи „Двигатель революции" колхозра Иарышев йул. бригади гектартан 4.5-шер центнер клевер вăрлăхĕ илнĕ.

Пысăк тухăç илни колхозниксен ĕçкунĕсен хакне ӳстерчĕ. Республикăри чылай колхозсем ĕçкунĕ пуçне 8-9-шар килограм тырă валеçрĕç. Вăрнар районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхоз 13-шер килограм, Тутаркас районĕнчи „Вахтеров" колхоз 15-шер килограм валеçнĕ.

Колхозниксем 1937 çулта тăрăшса ĕçленипе тырпул та нумай илчĕç. Иелчĕк районĕнчи „КИМ" колхоз членĕ хăйĕн çемйипе 1937 çулшăн 1000 пăт, „Çĕнĕ Иштерйак" колхоз членĕ Воробйов—1000 пăт тырă илет. Вăрнар районĕнчи Ленин йачĕпе тăракан колхоз членĕ—комсомолец Панфилов 1.100 пăт тырă тата 2.341 тенкĕ укçан илнĕ. Сталин йачĕпе тăракан колхозра 100 хуçалăх 200—400-шер пăт, 100 хуçалăх 400—1000-шер пăт илеççĕ. Колхозник Иерошин, ĕлĕк чухăн пурăннăскер, 900 пăт тырă илнĕ.

Пирĕн колхозсем çултан çула çирĕпленсе пыраççĕ, колхозниксем кунтан куна пуйан та кулҍтурлă пурăнакан пулса пыраççĕ. Çавăнпа та колхозла хресченĕн политикăла тата производствăла активлăх çĕкленĕвĕ пит пысăк. Ăна вăл историлĕ кунра, декабрĕн 12-мĕшĕнче партипе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн, коммунисла партишĕн, хаваслă та телейлĕ пурнăçшăн сасăланипе кăтартса пачĕ.

1937 çулта агрономсем те, трактористсем те, комбайнерсем те лайăх ĕçлерĕç. Агротехникăла ĕçсене, нихçанхинчен ытла пурнăçланă. Чылай трактористсем, комбайнерсем рекордлă ĕç тĕслĕхĕ кăтартрĕç.

Çавăн пекех, выҍăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç йенĕпе те 1937 çул ăнăçулă иртрĕ. Анчах та ку ĕçре пахалăх тата хисеп йенĕпе те тумалисем нумай-ха. Ку ĕçе халăх тăшманĕсем алă пырса чикни йулашкисене кăшни районăн, кăшни колхозăн халех пĕтерме тăрăшмала.

1937 çулта вăйлă тырпул туса илни, колхозниксен политикăла тата производствăла активлăхĕ çĕкленни, çĕрĕç оргăнĕсене халăх тăшманĕсенчен, икĕпитлĕ сынсенчен тасатса çĕнетни, 1938 çулта пире татах та вăйлă тырпул туса илме май параť. 1937 çулта республикипе вăтам шутпа 90-шар пăт илнĕ пулсан, 1938 çулта 100 пăтран кайа илекенни пĕр колхоз та пулмала мар. Анчах вăйлă тырпул хăй килмест, ăна кĕрешсе илмеле.

Пайан куна илсен республикă суртлă вăрлăхсене улăштарса хатĕрлес, вăрлăхсене хатĕрлес тата ытти ĕçсем йенĕпе те сене хатĕрлес тата ытти ĕçсем йенĕпе те мĕншĕн йулса пынине слҍотăн хытă пăхса тухмала.

Çураки сывхарса килет. Анчах хăшпĕр районсенче, пуринчен ытларах Патăрйел тата Иелчĕк районĕсенче 1937 çулхи тырпулсене халҍте валеçсе пĕтермен. 1937 çулхи тырпулсене халех валеçсе пĕтермеле, мĕншĕн тесен тырпула халиччен валеçменни çуракине хатĕрленес ĕçре тĕп чăрмав.

1938 çулта тырпул тухăçне ӳстерес тĕлĕшпе мĕн-мĕн тумали çинчен партипе правителствă план панă. Социалисăмла ĕç меслетне, социалисăмла ăмăртса ĕçлессипе стахановла йухăма анлăн сарса пырса 1938 çулхи йалхуçалăх ĕçĕсен планне ытлашшипех тултарассишĕн кĕрешĕве организацилемеле. Ку тĕлĕшпе халҍ чылай районсем, чылай колхозсем йулса пыраççĕ-ха. Пирĕн халех болҍшевикла ăмăртӳ сарса йамала.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе кайа йулса пыракан районсене слҍотăн уйрăммăнах асăрхаттарса хăвармала. Пăрачкав, Ишлей, Кувакинă тата Патăрйел районĕсенчен килнĕ делегатсенчен слҍотăн кайа йулса пынине пĕтерме татăклăн ыйтмала.

Слҍотра пурĕ 800 сын ытла пулаť. Вĕсем социалисăмла йалхуçалăхĕн чи аван сыннисем. Умра тăракан задачăсем çинчен слҍотра тĕплĕн сӳтсе-йавса çав задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн чăннипех болҍшевикла кĕрешӳ пуçарса йамала. Çавăн пек задачă тăраť слҍот делегачĕсем умĕнче.

Извещение

На заседание комиссии по приему и исключению из рядов ВЛКСМ в Чуваш. ОК ВЛКСМ к 10 часам утра на 2 марта 1938 г. в г. Чебоксары (ул. К. Маркса, дом, № 13) для участия в разборе апелляций

ВЫЗЫВАЮТСЯ:

1. Магницкий М. И. г. Чебоксары
2. Никитин А. И. г. Чебоксары, Коммун. строит. техникум.
3. Солдатченко Л. М. г. Чебоксары, Типография Чувашполиграфтреста.
4. Жиклаев А. Г. г. Чебоксары Управление Лесоохраны.
5. Поздняков В. Т. г. Чебоксары, Аэроклуб.
6. Саверкина В. Д. г. Чебоксары, Наркомфин.
7. Волков П. П. г. Чебоксары.
8. Рыков П. Т. Ишлейский р., Мамышевский с/с., д. Анач-касы.
9. Степанов А. А. г. Цивильск.
10. Васильев И. В. Цивильский р., Нюршинский с/с.
11. Артемьев И. А. Цивильский р., Перво-Степановская НСШ.
12. Иванов Е. В. г. Цивильск, Педучилище.
13. Челышкин А. И. г. Чебоксары, Кустпромсоюз.
14. Осипов А. И. Козловский р., д. Можары.
15. Иванова Е. И. Чебоксарский р-н, д. Маснеры.
16. Молодов И. О. г. Мар-Посад, колхозный театр.
17. Захаров Н. С. Козловский р., с. Никольское.
18. Родионова З. С. г. Чебоксары.
19. Александров Е. Д. Татаркасинский р., Моргоушская сред. школа.
20. Платонов В. К. Татаркасинский р., Б.-Сундырь.
21. Ерофеев Л. В. Татаркасинский р., д. Едигей, Ювановск. с/с
22. Свинцов И. Г. Чебоксарский р., д. Кугеси.
23. Крызов А. П. М.-Посадский р., д. Мало-Камаево.
24. Цветков Я. М. Шумерлинский район.

Просьба к райкомам ВЛКСМ обеспечить явку вызываемых лиц и представителей Райкомов в Обком ВЛКСМ.

Комиссия по приему и исключению из рядов ВЛКСМ при Чуваш. ОК ВЛКСМ.

Ответлă редактор ĕçĕсене тăваканĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Китайри вăрçă

ÇУРÇĔР КИТАЙРА

ХАНҌКОУ, II-25. (ТАСС). Шанҍдун провинцинче иккĕмĕш кун ĕнтĕ çапăçусем Китай çарĕсен сылтăм флангĕнче Ишуй тата Цзӳйчжоу хулисен районĕнче (Танҍцзин—Пукоу чукунçулĕнчен хĕвелтухăçнеле) пулса пыраççĕ. Кунта йапонцăсемпе пĕрле Манчжоу-Го чаçĕсем те пур.

Йапони çарĕсен икĕ колонни Цзининран хĕвеланăç йеннеле малала куçма хăтланнине Китай çарĕсем сирсе йанă. Китай çарĕсем хăйсен малтанхи позицийĕсене хăйсемех йышăнса тăраççĕ. Çав районта шоççе çулĕ патĕнче çапăçусем Йапонин 1.000 çынлă отрйадне хирĕç пыраççĕ. Февралĕн 24-мĕшĕнче ирхине Китай çарĕсен отрйачĕ Цзинин хули çине контратакă тунă. Йапонцăсем çав хуларан айаккала кайса вырнаçнă. Китай çарĕсем çапах та хулана кĕмен, мĕншĕн тесен йапонцăсем çавăрса илессинчен сыхланнă. Цзинин хули тавринче пысăк çапăçусем пынине пула хула пысăккăн ишĕлнĕ.

ШАНХАЙ, II-25. (ТАСС). Китай хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Шанҍдун провинцин çурçĕр пайĕнче Йапони çаресен тылĕнче Китай партизанĕсем 6 пин çынна йахăн вăрçаççĕ. Йулашки кунсенче партизансем Хуанçанҍ хулине (Чифуран хĕвеланăç йеннеле) илнĕ. Циндао—Цзинанҍ чукунçул тăрăхĕнчи хуласем çине партизансем пĕрмайах тапăнаççĕ.

Партизансем уйрăмах Шанҍси провинцинче ăнăçлăн вăрçаççĕ. Партизансем час-часах атакăсем туса Хебейпа Шанҍси провинцийĕсенче Йапони чаçĕсен сыхăнуне татнă.

ВĂТАМ КИТАЙРА

ХАНҌКОУ, II-25. (ТАСС). Йапонин Шанҍяо (Фын Йаҫран кăнтăрпа хĕвеланăç йеннеле) çине тапăнса пыракан 500 çынлă отрйадне Китай çарĕсем атакăланă. Çапăçу виçĕ сехет хушши пынă Йапони салтакĕсем 100 çын пĕтнĕ.

Фронтăн Ханчжоу патĕнчи участикнче Фуйан йатлă хулана (Ханчжоуран кăнтăрпа хĕвеланăçнеле) февралĕн 23-мĕшĕнче Йапони подкреплениĕсем 2 пин салт.к çитнĕ.

ШАНХАЙ. II-25. (ТАСС). Китай партизанĕсем Йапони çарĕсен тылĕнче пысăк активлăхпа çапăçаççĕ. Февралĕн 24 мĕшĕнче Китай партизансен отрйачĕ Йапонин Анҍдин тата Хуанду районĕсенчи (Шанхай ран хĕвеланăçнеле) чаçĕсем çине атакăланă.

Çакăнта пĕр вăхăтрах Цинпу хули сывăхĕнче (Шанхайран кăнтăрпа хĕвеланăçнеле) Китай партизанĕсем пысăк пунктсене чылай йышăннă.

Нанкин—Ханчжоу шоççе çулĕ çинче Китай партизанĕсем Циншанҍгуанҍ хулине (Уканран çурçĕрелле) туртса илнĕ. Çавна илнĕ хыççăн Китай отрйачĕ йапонцăсем кайала чакнă чух вĕсене Укан патне çитечченех хыçран хăваласа пынă.

Йутçĕршывсенче

◆◆ Февралĕн 25-мĕшĕнче Лондонра Галифакс лорда Англи правителствин йутçĕршывсен ĕçĕсен министрĕ туса лартни çинчен официаллă пĕлтернĕ.

◆◆ Францири депутатсен палати коммунисла депутатăн Круазăн доклачĕ тăрăх, коллективлă договорсем çинчен каларас саккунăн текстне йышăннă. Вăл текста йышăнассишĕн 442 çын сасăланă, хирĕç—108 çын. Саккун йалхуçалăх работникĕсем çине те сарăлаť.

Ик-виçшер йĕркен

Кушкăри колхоз çумĕнчи (Трак р.) вулав çурчĕн библиотекинче илемлĕ литературă кĕнекисем 985. Вулав çурчĕ 22 екземплҍар тĕрлĕ хаçат-журнал çырăнса йлет. Колхозниксем каççеренех вулав çуртне пухăнса ушкăнпа радио итлеççĕ. Халĕ РСФСР Верховнăй Советне суйлмали Положенине вĕренме кружок организациленĕ. Кружокра 55 колхозник вĕренеççĕ.

А. Василйев.

Нăрвашри „Красная Чувашия" колхозри (Тăвай р-нĕ) Павлов почталҍйон масса хушшинче хаçат-журнал сарассипе тăрăшса ĕçлет. Февралĕн 15-мĕшне вăл 2000 тенкĕлĕх тĕрлĕрен хаçат-журнал сарчĕ.

Халĕ ĕнтĕ кашни хуçалăхах хаçат-журналлă.

К. Лазарев.

Мамăшри (Ишлей р-нĕ) Буденный йачĕпе тăракан колхозри вулав çурчĕн пуçлăхĕ Г. Смирнов вулав çуртне час-часах хупă лартаť. Вулав çуртĕнчи радио ĕçлемест. Хаçат-журналсем çителĕклĕ çырăнса илмен, нимĕнле кружок та çук.

Колхозниксем „Чапайев", „Уçнă çерем", „Хурçă йепле хĕрнĕ", „Лăпкă дон" тата ыт. произведенисене те вуласшăн, анчах асăннă кĕнекесем вулав çуртĕнче çук.

А. Коленов.

Мартăн 13-мĕшĕнче Шупашкарта тата Улатăрта (медицинă учреждениĕсене, предприйатисене тата колхозсене валҍли)

БОНИФИКАТОРСЕН КУРСĔ уçăлаť

Курса 17 çултан кĕçĕн марриссене, пуçламĕш шкулта 4 çултан кайа мар вĕреннисене (арçынсене ытларах) илеççĕ.

КУРС 20 КУНА ПЫРАŤ

Курса вĕренме кайма районсенчи сывлăха сыхлав пайĕсем кăтартса панă тăрăх колхозсем, промпредприйатисем тата онвчире сиплекен пунктсем командировкăсем параççĕ.

Курсра вĕреннĕ вăхăтра курсантсене 60 тенкĕ стипенди тата 29 тенкĕ хватер валҍли параççĕ. Çул укçи командировкă паракан организацисенчен пулаť.

Чăваш АССР Сывлăха Сыхлав Халăх Комиссарначĕ

Академи театрĕнче

Февралĕн 28-мĕшĕнче

Вырăсла спектакҍ

„ОЧНАЯ СТАВКА"

(4 пайлă, 8 картинлă)

Аслă режиссор Г. В. Странский лартаť

Талон № 122, талон № 5.

Чăвашсен Йалхуçалăх рабфакне

БУХГАЛТЕР тата канцеляри пуçлăхĕ

кирлĕ.

ДИРЕКЦИ.

2—1

„Чăваш коммунĕ" çырăнса илмелли хакĕсем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Кĕçырăвĕсене кайала памасĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 103 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чуваш полиграфтреста. Заказ № 83, Тираж 15.500 25—94 ин I—V п. п.

М